1-мĕш №     Пĕр №—25 пус     Йанвар. 1933-мĕш çул.

# КАПКĂН




Епĕр хамăр планеене никамран та пытармастпăр... (Йулашки странитса пăх).

# Хоспотин Теваҫай патне Йекур колхоҫнĕк йанă ҫыру

Пĕлместĕнҫке, мĕнле сана аҫу йаҫĕпе ҫĕнмеллеши? Аҫу йаҫĕпе ҫĕнес вырăнне, хоспотин тесен аванрах пулĕ тесе шухăшлатăп хамăн ăсăмпа. Хоспотин тени вăл пирĕн ҫамрăксемшĕн темскерле-йутпатшалăхла илтĕннĕн туйăнаҫ. Ҫемперлен, Полтуин, Пуанкаре—кусем ĕнтĕ хоспотинсем пулаҫҫĕ. Хамăр ҫĕр шыва илсен, пирĕн хоспотинсем такҫанах ҫук ĕнтĕ, тĕппипех пĕтнĕ вĕсем.

Акă мĕн, хоспотин Теваҫай, хамăн ҫырувăмри малтанхи йĕркисенҫе сана хампалла паллаштарас тетĕп сана: епĕ „Ленин ҫулĕпе" колхосри Иванов Йекур йатлă колхоҫнĕк-утарнĕк пулатăп.

Ҫав тери сан пек пысăк францус ҫыннипе епĕ халиҫен паллашса курман. 1918-мĕш ҫулхи калăппа йĕркеленнĕ францус йанăралĕсене сахал мар куркаланă епĕ. Вĕсемпе фронтра ҫапăҫнă ҫухне пуринҫен ытла хыҫалтан палашкаласа илме тивеҫĕ. Тĕрĕссипе каласан, вĕсен пиҫĕсене курма май килмен, капиталисла ĕнсисене ҫеҫ куркаласа йулаттăмăр, тата ҫу сĕрнĕ ура тупанĕсем йалкăшса пынине курса йулаттăмăр, анҫах ырă ăратлă пиҫĕсене курма май килмесҫĕ.

Ҫапла ҫав ĕнтĕ, хоспотин Теваҫай, санăн пата, паллă йут патшалăх ҫынни пулса тăракан ҫаплă етем патне, пирвайхи хут ҫыру ҫырса йаратăп. Ҫыруне ҫыратăп акă мĕн пирки: епĕр иккĕмĕш петтилеткăна кĕретпĕр, Октапĕрти револютси пулни 15 ҫул тултарса 16-мĕш ҫула кĕни икĕ уйăх иртрĕ. 15 ҫул ытла епĕр капиталиссемпе помешҫĕксемсĕрех, хоспотинсемсĕрех, сансăрăнах хамăрăн ҫĕр-шыва тытса усраса ҫĕнĕ пурнăҫ туса пыратпăр.

Кӳрха иксĕмĕр танлашса пăхăпăр: иксĕмĕртен кам вăйлăрах, тĕреклĕрех—епĕ-ши, есĕ ши? Есĕ шултăра хапрăк хуҫи; епĕ колхоҫнĕк. Кам ура ҫинҫе тĕреклĕрех тăраҫ—Теваҫай хоспотин-ши, йе колхоҫнĕк Йекур Иванов-ши?

Есĕр мана штыкпа тата пулеметпа урарaн ӳкерме шутлараăр. Анҫах май килмерĕ. Есĕр ман пӳрге, ман килкартине тĕрлĕрен Колҫаксем, Теникинсем, Вранкĕлсем йарса пытăр. Анҫах ĕҫ тухмарĕ сирĕн. Шуркварти пыйтисене ҫĕрнесем хушшине хурса, лапҫăтсах хутăмăр епĕр. Есĕр пире плоккатăпа ҫавăрса илтĕр, пире выҫă усранипе пăхăнтарасшăн пултăр. Анҫах усси каҫа пӳрни ҫĕрни тăршĕ те пулаймарĕ.

Халĕ куратпăр ĕнтĕ: кам лаша айне пулнă, кам лаша ҫинҫе пыраҫ. Лаша ҫинҫе кăна мар, автомопил ҫинҫе те, трактăр ҫинҫе те, компайăн ҫинҫе те епĕрех пыратпăр.

Тата халĕ акă мĕне шута илсе пăхăпăрха иксĕмĕр—сирĕн миҫе хапрăк, миҫе савăт хупăннă, миҫе ним шарламасăр ларакан станоксем, миҫе акаймасăр йулнă уй-хир, миҫе ĕҫсĕр йулнă рапоҫҫи, миҫе нуша тӳсекен ҫĕрĕн ҫынни, миҫе выҫă вилĕмпе вилекен ĕҫҫынни?

Халĕ манăн тоххотсене хисепе илсе пăхăпăрха.

Пирĕн колхос ҫĕнҫул тĕлне мĕн пур сатанисене пурне те тултарса паҫĕ. Тупăшсем валеҫрĕмĕр. Кăҫалхи ҫул епĕ пĕлтĕрхинҫен 4 хут нумайрах, виҫĕм ҫулхинҫен 6 хут нумайрах тупăш курнă. Укҫам та пур манăн халĕ, тырăм та пур, аш-пăш та, ҫĕт-ҫу та, пахҫа-ҫимĕҫсем те пур сахал мар, колхос пасарне кайса сутмаллăх та пур.

Пуринҫен ытларах ыранхи кун пайанхинҫен лайăх пуласҫине ĕненӳ пурри паха. Епĕ хам пурнăҫа, хамăн ӳсĕме, хамăн тĕреклĕхĕме пĕлсех тăратăп. Епĕ сисетĕп халĕ ырă хĕвел манăн ҫӳреҫерен пăхнине.

Ҫавăнпа пĕрлех епĕ санăн криҫĕспа рапоҫҫисен револютсиллĕ йухăмĕ пăвнине тӳсекен йулташусемпе тусусем мана хирĕҫ тухма хăйсен хĕҫĕсене хăйраса хатĕрленине те сисетĕп. 1918-мĕш ҫулхи ĕҫсене аса илес шухăш пури санăн? Епĕр трактăршăн та тăрăшатпăр, ҫавăнпа пĕрлех есĕр тапăнсан кирлĕ пулакан пăшал тавраш сене таса тытмалли ҫинҫен те манмастпăр.

Пирĕн Тнепростройсем, пирĕн колхос уйхирĕсем тĕреклĕ сыхлăх айĕнҫе пурăнаҫҫĕ.

Вĕсен тĕреклĕхне икĕ йенҫен сыхласа тăраҫҫĕ: ҫи малтан епĕр хамăр, тата сирĕн рапоҫҫисемпе ĕҫхресҫенĕсем сыхлаҫҫĕ.

Вĕсен аллисене хытă ҫăмăртатăп. А вĕсем сана хăвна ҫăмăртаса тăкĕҫ, хоспотин Теваҫай, пит лайăх... пыршу-пакарту тухиҫҫенех. Ҫапла, хоспотин Теваҫай!

**Колхоҫнĕк Йакур Иванĕ.**

# Тĕн тымарĕсем хăрсан

*Иван Муҫи*

Ҫĕлĕкĕрсене илĕр: ахаҫ ҫын ҫинҫен мар—43 саспаллинҫен тунă хушамата йăтса ҫӳресе ывăннă Спассохристовокрестовоҫтвишĕнопохойавленски пуп ҫинҫен каласа парас тетĕп сире, йулташсем, ҫакă раштав йаҫĕпе ҫырнă калавра.

Ҫиркӳре „ҫветтуй турă, ҫветтуй хăватлă, ҫветтуй вилĕмсĕр, тесе кăшкăрса тăрас вырăнне, килте шур мамăк тӳшек ҫинҫе, вакун айне пулнă ҫын пек йăнăшса йăваланнă вăл варне-хырăмне, пуҫне, айаккине тытса. Ун умĕнҫе маттăшки тăнă литтăрĕ-литăрĕпе куҫҫӳл тăкса. Тухтăрĕ, ĕҫсем шанҫăксăр йенĕпе кайнине палăртса, пуҫĕпе сулласа илнĕ хыҫҫăн, шухăша кайса тăнă.

Шухăшласа тăрансан, маттăшкă ҫинелле пăхнă та ҫапла каланă:

— Наҫар, маттăшкă, унăн сывлăхĕ. Тӳрипех калам: вилет вăл сан.

Маттăшкă уласа йанă. Йытă пек уланă.

— Калаха: хăҫантан пуҫласа ҫирлерĕ вăра упăшку?—ыйтаҫ тухтăр ҫир историне пĕлес шухăшпа.

— Ой, ан та калах—15 ҫул ĕнтĕ вăл ҫире йерме тытăнни. Октапĕр револютси пуҫлансанах темĕн улăшăнма пуҫларĕ унăн сывлăхĕ. Хăй ҫиперех, ытти ҫынсем пекех, ҫӳрет, анҫах ҫирĕ ăшĕнҫех. Хусана ҫехо-словаксем килҫĕҫ. Ну, ун ҫухне ҫирĕ пĕтсе ларҫĕ.

— Кайран вара?

— Кайран вара... Кайранхине калама пуҫлаҫҫен малтан пĕр тапхăр хуйхăрса илме срок парха кăштах.

Маттăшкă темиҫе ҫентнĕр йăвăрĕшĕн сывлаăн илет. Унтан калама тытăнаҫ.

Спассохристовокрестовоҫтвишĕнопохойавленски пуп коллективисатсипе кулаксен класне тăпăлтарас

ĕç вăйлăн пуçланса кайнăранпа ытларах хĕн куракан пулса кайнă имĕш.

Ђир мĕнле йӳççе хăпарса тăни çинђен каланине итлесе пĕтерне хыççăн, тухтăр шухăш кули айне кĕрсе кайаť те, нумайах тăмасť унта,—каллех тухаť.

— Нта! Йăвăр, çăмăлах мар ђирĕ. Сывалассине шанмалли çук пулин те, кăштах та пулин лăплантарма май çукши, тетĕп те ăна. Итлеха, акă мĕн туса пăхас: пӳрт ђӳређисене пурне те пирпе карса тухас. Унăн канлĕхне лайăхрах сыхлама кирлĕ. Сотсиалисăм строительстви тăвас ĕç ăнăçуллă пынă май, тĕне ĕненекенсем сахалланса йулаççĕ. Тĕн ђирлĕ халђ. Унпа пĕрле унăн тарçи пулса пурăннă упăшку та ђирленĕ. Тулти строительстă шавĕсем нимĕн те ан илтĕнђĕр пӳлĕме...

Пуп çӳçенсе кайнă. Маттăшкă аллине сулса калана:

— Ех, тухтăр! Усси пулмĕ. Мĕн пулса иртнине ђунĕ каламасăрах туйаť.

— Ну, çапах та,—тенĕ тухтăр.—Унтан тађăка çăкăртан йăваласа ђиркӳ кĕлетки туса лартасђĕ краваđĕ умне. Хăй слушит туса пурăннă таса ђиркӳ халĕ те хупăнман пек туйăнтăрђĕ ăна.

Тепĕр çирĕм-вăтăр минутран пуп краваđĕ умне ђустаран тунă ђиркӳ пырса лараť. Хĕресĕсем те пур.

Пуп вăрансан çав ђиркӳве кураť те, ура айне пулнă ăман пек йăваланса, кăшкăрса йараť. Е-ех, хăрушăçке кăшкăрни!

Ђиркӳ кĕлеткине ђасрах пуп краваđĕ умĕнђен илсе урăх çĕре кайса лартаççĕ.

— Приххот çыннисем, ђиркӳве хупса, унтан вулав çурђĕ тунине аса илђĕ ĕнтĕ ку. Пулăшмарĕ пирĕн „ђиркӳ“.

Ђарăнма пĕлмен тухтăр татах тепĕр йапала тума хушаť.

— Акă мĕн туса пăхас пулаť, маттăшкă: тула тухса кай та, çăпата сыр, çĕтĕк ђапанпа çĕтĕк çĕлĕк тăхăн (ăçтан та пулин тупасах пулаť ĕнтĕ вĕсене)... пит-куçна ђаппан çухипе хупла... упăшку паласран. Çапла вара пӳрте кĕрсе мăнăрах сасăпа... сассу арçынла тухтăр: паđăшкă килте-и? те. Епĕ: килте!—тейĕп. Есĕ: арăм сывмарђђĕ те, кĕлтумасăр вилсе кайасран хăратăп. Пăт çурă çăнăх, çирĕм çăмарта, тата кăштах паранкă хампа пĕрлех лартса килтĕм,—те. Анђах сассуна улăштарма ан ман, колхоçнĕк сасси пек тухтăр.

Маттăшкă итлет. Каланисене тăваççĕ. Маттăшкă колхоçнĕк рођне артис пекех, аван выђаť. Анђах пуп ӳсĕрсе каллех сывлăшне çухатма пуçларĕ. Мĕн тумалла пулаťха ĕнтĕ малалла?

— Ĕненмерĕ „хресђен“ килнине. Тĕлĕк куратăп терĕ пулмалла.

— Тепĕр йулашки канаш парса пăхам. Ку ĕнтĕ пулăшмаллах пек туйăнаť. Хаçатсенђе прокулђĕксем, кахалсем, рваđсем, пйантсăсем çинђен çырнă саметкăсем ђылайах. Вĕсене кашнинех хаçăпа касса илĕпĕр те, çилĕм тупса пĕрле çыпăçтарса лартăпăр, Вара вĕсене „çĕнĕ хаçат илсе илђĕç“ тесе ăна тыттарăпăр. Прорывсем çинђен çырнисене нумайах тупас пулаť...

Каланине тăваççĕ.

Анђах ђирлĕ пуп сысна çури пек çухăрса йараť.

— Мĕн пулнă?

— Ăçта инкек?

Инкекĕ инçетрех пулман. Хайхисем, „çĕнĕ хаçата“ илсе пăхаççĕ те, унăн тепер йенђе йăлтах Совет сойусĕн çитĕнĕвĕсем çинђен çырнă статйасем пулнă. Акă, ăçта пулнă инкекĕ!

Прокулщђĕксем çинђен çырнин тепĕр йенĕнђе сотсиалисăмла ăмăртакансем, утарнĕксем кăвар пек хĕрсе ĕçлени çинђен каласа тăракан саметкăсем пулнă. Теприн ђе-ђукун шăратас тĕлĕшпе, тĕнђе историнђе халиђђен пулман хăвăртлăхсемпе пырса, Совет сойусĕ Амерĕкрен иртсе кайса тĕнђери пĕрремĕш вырăна йышăнса ларни çинђен пĕлтерекен статйа пулнă. Виççĕмĕшĕнђе—нехтă каларас тĕлĕшпе Совет сойусĕнђен малта Амерĕкçеç йулни çинђен, тата машинпа трактăр стантсисем пирĕн пĕтĕмпе 3.100 çитни çинђен, тăватăмĕшĕнђе—15 мĕлйун хресђен хуçалăхĕ колхосра пĕрлешни çинђен, йалхуçалăхĕнђе кăçал 200 пин трактăр, 16000 компайăн ĕçлени çинђен тата ытти çав май кивĕ тĕнђе вырăнне, сотсиалисăм тĕнђи пулса пынине кăтартса тăракан статйасем пулнă. Тфу ты! Аптăрамалла ку хаçат тенипе.

Тухтăр паппă Пий сăнне ӳкерсе çтена çумне çакса йама хушаť. Маттăшкă итлет. «Исвеçтири» каррикатурăран паппă сăнне мăнăлатса ӳкерсе, тухтăр каланă пек, çтена çумне çапса хураť.

Вăл та пулăшмасť. Пуп, хӳрине алăк хушшине хĕснĕ йытă пек, çухăрса йараť паппă сăнне курсан. Шанми пулнă ĕнтĕ вăл паппăна.

Тухтăр пуçĕ усăнђĕ.

— Нта!—терĕ вăл йулашкинђен, пупăн катам пир пек пулса кайнă пиђĕ çинђе пуçне кăтартса ларакан шĕпĕнĕ çине пăхса.—Тымарĕ (кив еккономĕк) хăрсан, йăвăççин (тĕнĕн) те пĕтмелле. Йăвăççи пĕтсе ларсан, унта пурăнакан кăпшанкăсем (пупсем) те пĕтеççĕ. Вилет ку та. Сывалас çук. Иккĕмĕш петтилеткă вĕçĕнђе ун йышшисем пулмалла мар!

---

## Упа йе...

Упа çинђен мар... упа вăл вăрманта пурăнаť... Çухрари (Йетĕрне районĕ) комсомол йаđейкки çинђен çырса пĕлтеретпĕр кунта. Упа пек вăл хĕл ыйхине кайнă.

Политвĕренĕве вăл нойапĕрĕн 26-мĕшĕнђе пуçăнмалла йышăннă, анђах халиђђен те ку ĕçе пуçăнманха. Партти вĕренĕвне комсомолĕссемпе колхоçнĕксене йăвăçтарасси çинђен наđар шухăшлаť, тесе пире пĕлтерет Иванов Илйа.

Вĕренме шухăшламаççĕ, мĕншĕн тесен шухăшламалли аппарат вĕсен пăсăлса кайнă.

## Çăварпа.

Улатăр районĕнђи „Хĕрлĕ поххот“ колхосĕн претсетаттĕлĕпе çекреттарĕ патшалăх валђи укçатенкĕ пухасси çине оппортунисла, çăвара карса пăхаççĕ. Тăватăмĕш кварттăлта пĕр пус та укçатенкĕ пухайман.

Çăварпа пăхсан курăнмĕ, куçпа пăхтарасђĕ. Куçĕсене уçаймаççĕ пулсан, ђакамăн пырса ломпа хирсе уçса памалла.

# Вилĕ ђунсем

*Ник. Пушкĕн*

Ђăнах та вилĕши ку ђунсем? Вилнех-ши? Шел... Шел... Кăмăллă сотсиалисăмла пурнăç ђеђекленнĕ вăхăтра вилсе сайа кайнă. Ай шел!.. Çу-у-ук, вилмен пулĕ Ĕненме хĕн. Сахалăн та мар вĕт-ха вĕсем. Йышлăнахха ку ђунсем. Ђăнах та сахалăн мар.

— Камсем есĕр капла виленçи тăваттăр?

— ?..

— Йăшаланаççĕ!.. Хусканаççĕ!.. Вилмен, ђăнах та вилмен. Ай!

— Сăнĕсем те пĕре те ўкмен,—тейĕ такам та ку вилĕ ђунсене курсан.

Ере-ĕ-е! Ку ђунсем вĕсем вилĕ çын пек имшер мар-ха. Ку ђунсем ўркенмесен Капкас сăртне те лăш та мар çавăрса антаоĕç вĕсем ертелпе. Вĕсенђен пĕрне Çеркейĕв Темйанне çыхăнха, ерехпе лайăхрах пĕсехине хĕртсен йанахна пăрса лартĕ.

Вилесси вилменех ĕнтĕ ку ђунсем. Шĕвĕртмен çĕвĕ йĕппипе тирсе пăхарха айккисенђен. Унсăрăн палаймăпăр та вĕсене.

— Ы-ы-ы-ых!

Сас параççĕ ђиперех, вилмен ку вилĕ ђунсем. Татăх тирсе пăхарха сăнамаллăх.

— Ырагăт, ма тиреттĕр?

Вилмен, лайăх сасах параççĕ.

— Камсем есĕр?

— Кĕçĕн-Хăмарккасем.

— Миçейăн есĕр?—Ыйтмалах пулаt.

— Пĕрре, иккĕ, виççĕ, тăваттă... Вуниккĕ,—сурĕ ђĕрĕлнисенђ н пĕри пўрнисемпе.

— Ай-ай, ђылайранпах вилнĕ есĕр Çирки Темйанĕ. Ай-ай?

— Вилмен вĕт.

— Кăсем камсем, ăçти ђăвашсем тата вырăнтан та хускалмаççĕ. Сăмах хўшсамăр?

— Мăн-Сĕнтĕрсем епĕр.

— Миçейăн?

— Вунтăваттăн,—çавăрса хуђĕ Анттун Ахванесĕ.

Пурте шăкăрипех тупăнђĕçе ĕнтĕ хађ. Вунтăвата комсомолĕс вĕсем, вунтăвата йĕкĕт. Питте паха йĕкĕтсем ĕнтĕ кăсем. Маттур хĕрсемшĕн каççах кайакан етемсем.

Етеммисем вилмен, ђунĕсем те ĕлĕкхи вырăнтах. Пустайах вилĕ ђунсем терĕмĕр ађасене. Ђĕрех, ђĕрех пулмасăр ара ђĕрех. Вилме кам шухăшлатăр ара хаљхи саманара. Çитмĕл çулхи муђи те тепĕр çитмĕл çул ĕмĕрне тăсасшăн.

— Ывăлăмсем пурнасахђĕха, тет вăл. Муђисенђен те сахал мар утарнĕксем.

* * *

Мăн-Сĕнтĕрти комсомол йађейккин çекреттарĕ Антонăв Ухванес Йетерне райкомоленђен комсомол финанс поххођĕн укçа-тенкĕ пухмалли сотсиалисăмла саккасене илсен ак çапла каланă:

— О-о-о ой! Ой, Ваçка... ăçтан тултаратпăр епĕр 14 комсомолĕс кăна, 1200 тенкĕ вĕт.

— Укçа пухмалла!—тенĕ вăл пĕрне.

— 1200 тенкĕ,—тенĕ тепĕрне.

— Ђылайах çав,—тенĕ виççĕмĕшне.

— Пухмаспари мĕн укçа,—тенĕ тăваттăмĕшне.

— Ђăнах та... ăçтан ун ђухлĕ,—тенĕ вунăшĕнђен тепĕрне.

— Çук капла йурамĕ, райкомол пĕлсен хыраt пуçа,—тавçăрса пăхнă Антонăв.

Çав хушăрах иккĕленнĕ. Шанман ђĕри ўркенђĕкле айаккинђен шакканă. Комсомол пилеђĕ кăсйинђе Антонăва пĕр майах: „пухас, укçа пухас"—тесе тĕккеленĕ. Антонăвăн сисĕмлĕхĕ, укçа пухасси тейăпăр хăт, пĕр карт çўлерех çĕкленнĕ пек пулнă.

— Ађасем, пухатпăр пулĕ укçа,—тенĕ вăл вунăтăваттăран хăш-пĕрне. Лешсем иглемен, хыçкаланнă, ђăхăмланă.

— Ну тата, тупнă йапала,—тенĕ пĕри.

— Укçа пухмалла тата,—тенĕ тепĕри.

— Ăçтан çавăн ђухлĕ ара,—тенĕ кахаллăн хăшпĕрисем.

— Мана ан та кала,—çĕлĕкне сăмса таран тыса лартсах уттарнă кахаллисенђен кахалли. Кăшт кăна тăрса йулнă вара Анттонăвăн укçа-тенкĕ пухас шухăшли.

Мĕн тунă тетгĕр-ха вара Анттонăвсем?

Аллисене йĕм кăсйисене ђиксе, пируссене çавăрса хыпса укаланă темелле пулаt. Хăш-пĕрисем айаккисем шăтса кайађђенех мађђаналла сурса выртнă тесен те, вĕсем уншăн кăмăла йăвăр илмеççĕ. Шантарсах калагăп—ђăнах та кăмăла йăвăра илмеççĕ. Мĕншĕн тесен вĕсем 200 тенкĕ кăна укçа пуханçи тунă. Халĕ вĕсем ăна пурге:

— Епĕ пуçтартăм!

— Епĕ те вăл ĕçе хутшăнсa!..

— Комсомолăн финанс поххођĕ тăк, епĕ те йулман, теççĕ.

Пурте ырă йатлă пуласшăн. Валеçсе те пăхасшăн та вĕсем çак 200 тенкĕне кăшни çинех, анђах каласмалăх та тивмест вăл вĕсене. Ыглах аптраççĕ пулсан акă çапл туса парăпăр вĕсене.

— 1200 : 14=86 тенкĕ тивет калкалăн. 86-шар тенкĕ укçа пухмалла вĕсĕн кашнин. Анђах вĕсем комсомол йатне илнĕ етемсем çавна та пухаймаш 2—3 уйăх ђлен укçи тўлемен кĕнекесене кăна кăсйисенђеч тухса укесрен ђиксе çўренĕ вунтăваттăр çамрăк. Паттăрах çав паттăр, вунтăваттăран улгăшĕ кăна çенĕ сайома çырăннă. кăсем ыттисем сайомсăрах шăхăрса çўреççĕ вĕсем.

Мăн-Сĕнтĕр йалсоветђĕ укçа-тенкĕ пухас ĕçр хулай таранах прорыва кĕрсе ларни, Сĕнгĕр комсомолĕссемшĕн масара кайгăр.

Аптрамаççĕ ађисем, йалсоветĕн финанс çекцийĕ ђленне те кĕмеççĕ вĕсем. Унта кĕрсен сайома çырăнмалла пулĕ тен.

* * *

Сĕнтĕртен тухса Кĕçĕн-Хăмарккана кайар. Кăштах хыпаласа пăхар.

— Ăçта сирĕн комсомол, тупса пар?

— Кунта! - ответлерĕ йађейккă çекреттарĕ Çеркейăв Темйан мухмăрпа.

Пуçĕ хĕсет пулĕ таха, кăштах ђăрмантарарах çавах. Тен кăсем укçа-тенкĕшĕн ўке тăрах кĕренĕ пулĕ. Йыш çитмелле ĕçлеме—вуниккĕн.

— Йепле пыраt сирĕн финпоххот?

— ?..

— Каласам ара, кала? Çук, ђĕнмест Тинеккă.

— Нта, мĕнђулхĕха сирĕн финсаккăс?

— Пĕлмеестпĕр,—тухрĕ аран сас.

— Райкомол йани ара, пулĕ, мĕн ђухлĕ тултартăрхя ăна?

Ответ питте кĕске:

— Çухатса,—илтĕнет сас Хăмарккара. Калама та аптрамалла. Ак тамаша, пуçĕсем пурши тата, хыпаласа пăхарха.

— Пĕрре, иккĕ, вуниккĕ. Пурте пур, пврин те пуçĕсен мăйĕсем çинђе çирĕппĕнех лараççĕ. Анђах..

— Йепле капла, пухнах пулĕçке есĕр укçа-тенкĕ? Пухмасăр йепле пултăр. Кунсем штурăмла вĕт.

— Çук, епĕр пĕр пус та пухман укçа,—ответ парат Тинекка.

Питте паха, мĕн кирлĕ тата. Ĕçĕ те çук, сăмах та кĕске. Ĕçлесен ђăнах та ђăрмав нумай çав. Капллипе питте калкал. Çавăнпах çав Хăмарккка комсомолĕсем ђăрманма та шухăшламан. Аван.

Ăс-пуç кăштах тайлăккийех кансĕрлет çав, пађах астумасăр йулађђĕ. Ађасен йатне пăсса пăрахни мĕн. Сайомшăн хытă кĕрешнĕ мĕн вĕсем. Хытах çапăçнă куншăн. Çав çапăçура сайомсем те кăсйисенђен тухса ўкнĕ. Çухатнă еппин Халĕ вĕсен сайом çук, сайомсăрах шăхлиђă калаcа лараççĕ. Çĕнĕ сайома вуниккĕрен пĕри те çырăнман снаш. Çапла каламалађђĕ паçăрах.

Комсомолĕсем терĕмĕр марихе çаксене? Ăçтан шухăшламасăр калатăн çав сăмаха. Ђĕлхейĕн шăмми çук çав шелмĕ. Комсомолĕсем пулман мĕн вĕсем.

— Мĕнле апла?—тейĕр есĕр. Ăна калаттăрах. Апла пулсан ак çапла çавăрса хурăпăр.

— Хăмарккка комсомолĕ çултаlăк хушши ђлен укçи тўлемен пулсан „песпартейнăй краштанин" пулса тăнă тейăпăр. Аван мĕн ађасем комсомол тирне пĕркеннĕ мĕн те, тир сĕвĕнђĕ пулĕ çав.

Çапла хăмăрккасем, аван ађасем. Вĕсем укçа пухиђђен хĕсĕр ĕне сĕђĕ те йухса анĕ.

* * *

Етем тени кăштах вăл хусканат, шывкалат, тапкаланат, хыçкаланат пулсан, унăн ђунĕ пурах пулат. Ăна вилĕ ђун теме нийепле те май килмест. Ăна ан та шутлăр, вăл тĕрĕс пулмаст. Анђах така пек сиксе çўрекен етемсем хушшинђех хăт ђунĕпе пăсĕ пулсан та, вилĕ ђунлă пулма пултарат. Ун пек етем пайанхи штурăмла кунсенђе мĕлке пек кăна курăнат.

Акă Мăн-Сĕнтĕрпе Кĕçĕн Хăмарккка комсомолĕсем пурнăçран йулса ĕçе пађах манса кайнă. Çавăн пек етемсем вĕсем ĕçре такăнтарса пыраççĕ. Епĕр вĕсене вилĕ ђунсен каттекорине çыратпăр. Вăл каттекорирен тухас теççĕ пулсан, халех хăйсен ĕçĕсене ђĕртсе йарса финанс фронтĕнђе ђăнђанах польшевикла кĕрешекенсем пулђђăр.

## Пуçне картус тăхăннă çын отђођĕ

Кăнтăрла иртсен 9 сехетре Çĕрпў райпрофсоветĕн пленăмĕ пулмалла. Ун çинђен кашни уђрештенинђех, епĕр хамăр пилĕк пўрнене йепле пĕлетпĕр, çавăн пекех пĕлеççĕ.

Ку пленăма 5 сехетре аран-аран уçрăмăр. Çапах та пур те çук-ха. Пленăм уçăлсан пĕр 15—20 минутран пĕр çын картусне вăйпах туртса лартнă, паљто çухине тăратнă калама та çук пысăккăн утса кĕђĕ. Ку кам? Пăхап та шутлатăп. Е-е-е.. Хайхи çынна Палашовă палланă:—йулташ Каврилăв, маларах ирт,—терĕ вырăсла.

Ĕнтĕ пĕлтĕмĕр ку перекет кассинђи Каврилăв. Хайхи ăна ђерег çитрĕ.

— Малалла перекет кассин инспектăрĕ хамăр районра укçа-тенкĕ ĕçĕ мĕнле пыни çинђен Каврилăв йулташ калат,—тесе сăмах пађĕ Каврилăва профсовет претсетаттĕлĕ Саррă.

— Йулташсем! Епĕ районра сайом йепле сарăлса пыни çинђен, тата вĕсен укçи мĕнле пухăннине, но пĕр сăмахпа каласан перекет касси çинђен ним те пĕлместĕп,—тесе пленăмра çапла виç сăмах та çурăпа хăйĕн токлатне пĕтерђĕ. Каврилăв йулташ хулара сайом укçи тўлес тĕлĕшпе хăш уђрештени малта, хăшĕ кайра çапкаланса пыни çинђен те пĕлмест.

Каврилăва ыйтусем парсассăн та ним те тухмаст. Вăл та вăтанат пуљ çав, районĕ кайра пырат те вăл ĕçпеле. Ђăпта йалавĕ те сăмса тăрăнђех ларат. Ăçтан калас пит хĕрелет. Çакна кура пленăм Каврилăва хытă йатлас терĕ. Вăл килĕшмест. Ăçтан килĕшен ĕçлемен ĕçшĕн хытă йатланипе.

Каврилăва епĕ шутлап: хытă йатланнипех каçармалла мар пуљ, тесе. Мĕнле ши? Пўрократ, оппортунис, укçа-тенкĕне пухас ĕçе хак памаст.

Уса.

## Токлатђĕк.

**Çĕрпў районĕнђи перекет касси пухкалтĕрĕ Миххайлăв Й. Ђăваштĕпĕстăвкомне финанс планне район мĕнле тултарса пыни çинђен отђот тума килнĕ. Хăй сайом сарас ĕç йалсенђе мĕнле пынине те, финутарнĕксен шутне те, районрах миçе тенке выђаса илнине те, т. ыт. пĕлмест.**



Пит те тĕлĕнтĕм санран:
Кассă пуçлăхĕ пулан,
Сайом çинђен ыйтсан
Вăкăр пек пăхан,

М. Проссăв.



# Вунасусăђ план

*Сенĕк*

Иртенпех тулхăраť, ахрашаť, вĕђĕленет пайан Куштан Тимахви. Вырăн çинђе ђухнех хăй çумне ăшăнма кĕрсе выртнă кушакне хўререн йарса илсе урайне çаварса çапрĕ. Лешĕ аран ура çине тăрса йăраланса кĕрсе кайрĕ кăмака айне. Ирхи апат çинĕ ђухне нимĕн сăлтавсăрах арăмĕпе харкашса илђĕ.

— Çирĕм çул пĕрле пурăнса кăмăла килнĕ апат пĕçерсе параймарăн; тахçанах хăваласа йамаллађђĕ те сан пек ланђашкана, анђах авалхи саккуна пăсас килмест,—терĕ вăл сĕтелĕн тепĕр йенђе хăйне хирĕç ларакан арăмĕ çине сиввĕн пăхса.

Лешĕ çăварĕнђи ђăмлакне хыпаланса çăтса йаđĕ те, нимĕн ђĕнмесĕр сĕтел хушшинђен тухса, кăмака умĕнђи ђăлана кĕрсе савăт-сапа çума тытăнђĕ.

— Есĕ, ђупкăн йытă, мĕн тата тăрана пĕлмесĕр кавлесе ларатăн. Ăçта кайма хушнăђђĕ епĕ сана. Ахаль ђухне сана килте курма çук, пайан ку таранђђен ватă тĕве пек çисе тăранаймасăр сĕтел хушшинђе тымарланса ларатăн. Пошшол халех Çеркей атте патне, сволăђ!—тесе кăшкăрса пăрахрĕ вăл ывăл ађине.

Митрахван ашшĕн йăлисене питех аван пĕлет, ашшĕ ђышкипе сахалах паллашман вăл вунсаккăр çул хушшинђе, çавăнпа хăппăл-хаппăл тумланса тухса шурĕ пўртрен.

— Атте ђирлĕ, ђасрах килме ђĕнет те паđăшкăна,—терĕ Тимахви ывăлне лешĕ алăкран тухса кайнă ђухне.

— Есĕ, Мархва, урам йенђи ђăлан ђўређине халех тўшек çиттипе кар, ђăнах та çуртра ђирлĕ çын пур пек пултăр, унсăрăн ку саманара пупсемпе кам хутшăнса пурăннине сăнасах тăраççĕ; паđăшкă килсен ху Мирун кĕрўсем патне кайса ларăн, туђккĕ кайаđђен пире мĕн те пулсан çыртмалли хатĕрлесе хăвар,—терĕ вăл арăмне.

Тимахви çуртĕнђе пурĕ те вăл хушнă пек пулса пыраť; вăл командаваť тума пит лайăх вĕреннĕ,—вăл патша çарĕнђе фельтфебел пулнăскер; фельтфебел йăлисене вăл халĕ те пăрахман-ха: хăй каланине итлемесен, хăлха ђиккинђен йанклаттарма хатĕрех. Мĕн хушнине Мархва турĕ те, ђасах тухса кайрĕ йалĕнђи хăйĕн хĕрĕ патне.

Нумай кĕттермерĕ. Çеркей пуп та килсе çитрĕ.

— Канăçлăх пултăр сире!—терĕ вăл алăкран кĕрсен малти кĕтес йенне пăхса виçĕ хут сăхсăхса илсе.

— Курăн ку саманара канăçне, кĕтсех тăр. Килех, Çеркей атте, тĕпелелле иртсе лар,—терĕ те ăна хирĕç Тимахви, унтан ывăлĕ йенне пăхса куçне хĕссе илђĕ.

Митрахван кăна курсан ђасах тухса кайрĕ урама.

Пўрте иккĕшĕ çеç йулсан, Тимахви кăларса лартрĕ сĕтел çине арăмĕ хатĕрлесе хăварнă ѐçмесимене. Тытăнђĕç икĕ тус хăналанма.

— Ну, Тимахви Çитăрăђ, мĕнле пыраççĕ санăн йулашки вăхăтра „хуçалăхпа-политтĕк кампанийĕсем“,—терĕ пупĕ пĕр стаккан çуттине ѐçнĕ хыççăн ђăх çăмарти пысăкĕш шăрттан татăкне ђăмламасăрах çăтса йарса.

— Мĕнле пынине хăвах пĕлетĕн ѐнтĕ, Çеркей Иванăђ. Ѐнерхи истори хыççăн ыран-пайан раскулађђĕт тăвассине кĕтсех тăма тивет. Пĕтĕмпех пĕтерсе хуђĕ мана ѐнерхи сопранинђе Йăваш Иван, мĕн пур ѐмĕте татрĕ есрел.—„Тимахви вăл клас тăшманĕ, вăл авалхи кулаксен ăрăвĕ, хăй те çын йунне сахал ѐçмен, хăварах пĕлетĕр епĕ ун патĕнђе револђутси хыççăн виçĕ çул тарçăра тарăхса пурăннине; вăл колхоса хăй тыррине сыхлама кĕресшĕн, колхосра пуç пулса колхоса шалтан аркатма кĕресшĕн; епĕр ђухăнсемпе хăшпĕр вăтамсем колхоса тин ђăмăртантарма тытăннă вăхăтра вăл колхоса хирĕç уççăнах акиттатсилерĕ, халĕ колхоса йалти ѐçхресђенĕ пĕтĕмпех кĕрсе колхос çирĕпленсе çитсен Куштан Тимахвийĕ те сайавлени параť. Кам ѐненĕ клас тăшманĕ колхоса йуратнине. Тимахвийе колхоса йышăнма мар, халех раскулаđђĕт туса йалтан ăсатмалла. Сайавлени парађђен малтан Тимахви Çеркей пуппа канашланă пулмалла, вĕсем иккĕш пĕрпĕринпе пит таđă çыхăнса пурăнаççĕ“ терĕ колхосниксем умне тухса.—„Тĕрĕс калатăн, Иван Йекорăђ!“—терĕç пĕр сасăпа пухури çынсем. Кĕрў колхосри „активра“ тăраť пулсан та, нимĕн калаймарĕ ăна хирĕç ман майлă. Кĕлĕмĕç тавраша пĕтĕм халăха хăй йенне çаварђĕ. Ђăтма çук ку мăшкăла! Çавăнпа та санпа канашлас терĕм, Çеркей Иванăђ,—терĕ пупа ответлесе Тимахви.

— Пулаť, Тимахви Çитăрăђ, пулатех ун пекки, унтан йăвăртарах мăшкăлсем те курма пулаť. Самани çапла. Акă илер-ха хамах. Епĕ курнă мăшкăла шутласа та кăларас çук. Нумайах та пулмасť, Ентри-кассинђи Кантратти Христохворăђăн карђăкĕ сывах мар тенине илтсе, пăртак тупăш илес тесе, кайрăм карђăка „христус йунĕпе“ емеллеме. Ђĕнмесĕрех кайнипе çуранах утмалла пулђĕ,—икĕ çухрăм инçех мар терĕм. Çитрĕм, хам ѐçе турăм. Унтан пăртак хăналама тытăнђĕç. Ђылай ѐçрĕмĕр старикпе. Авалтанпа çирĕп пурăннă çыннăн тупăнатех паđăшкăшăн. Киле лашапа леçме шутларĕç, трантаспах йаđĕç. леçме старикĕн кĕçĕн ывăлне Мируна хушрĕç. Пыратпăр йурттарса. Çурма çула çитсен, урапа темле канава кĕрсе перĕнсе, транттасăн вăта каштисем шарт! турĕç те, епĕ çатан тĕпĕ мĕнĕпе айала ишĕлсе антăм; транттас çатанин аркисене йарса тытса ѐлкĕреймен пулсан, тен урапа айне пулса вилмеллеђĕ-и, çапах та ларма вырăн çуккипе транттас ăшĕнђе лашапа

пĕрлех ҫупса пымалла пулҫĕ; ҫитменнине лаши ĕрĕхсе кайса сиккипе вĕҫтерет, епĕ те унпа пĕрлех сиккипе ҫупмалла пулҫĕ. Ҫарха, Мирун лашăна, тетĕп. Ҫарăнмасть. „Ҫарха, турă ҫури Мирун, лашăна“ тесе тилмĕретĕп. Мирун ҫаврăнса та пăхмасть. Ҫаплипех ҫупмалла пулҫĕ киле ҫитиҫҫен. Калама ҫук ăш пиҫрĕ ҫапла ҫупнипе. Ĕлĕкхи саманара пулсан ҫапла тунăшăн, Мирун ҫĕркуҫланса ларса манран каҫару ыйтнă пулĕҫҫĕ. Халĕ мĕн. Халĕ... „сана тăхăр пăтлă арҫуррине турттарса ҫӳресе транттаса ҫĕмĕртĕм“ тесе Мирун ҫутех пушăпа хĕртеҫҫĕ. Мăшкăл мар-и ĕнтĕ ку. Ĕлĕк пулсан кирек кам патне пырса кĕр, ҫи хисеплĕ хăна пулатăн, савăнăҫ кӳретĕн ҫав ҫурта. Халĕ. Халĕ.. кам патне те пулсан ăнсăртран лексен, ҫасрах тухса кайассине кĕтеҫҫĕ; тухса кайсан есĕ ларнă вырăна кĕл шывĕпех ҫăваҫҫĕ. Мăшкăл мар-и ку ĕнтĕ. Кашни темонстратсинҫе пуп сăнне йăтса ҫӳресе мăшкăллаҫҫĕ. Ҫитменнине сăнĕ сăн мар: кӳпҫенĕ пит, ҫармак куҫ, сăмса вырăнне атă калăпĕ, йанах ҫинҫе виҫĕ пĕрҫĕ ҫӳҫ, хырăм вырăнне пиҫке, урасем ухват йевĕрлĕ, т. ыт. те. Шуйтан сăнне те илемлĕрех тăваҫҫĕҫ ĕлĕк карттинсем ҫинҫе. Йепле ҫăтмаллаха ку мăшкăла. Тавай, Тимахви Ҫитăрăҫ, ҫăн йӳҫĕтнине тепрер стаккан ĕҫер те, унтан канашлама тытăнăпăр,—терĕ пуп аллине тулли стаккан патне тăсса.

Ĕҫрĕҫ пĕрер стаккан, унтан тепрер; ĕҫнĕ хыҫҫăн ҫыртрĕҫ, унтан тытăнҫĕҫ канаша.

— Мĕн тăвас?

— Мерă принимать тăвас.

— Мĕнле мерă?

— Кĕрешӳ. Тĕрлĕ майпа кĕрешес!

Ĕҫме ҫарăнсах тытăнҫĕҫ хайхисем кĕрешӳ планĕ тумашкăн.

— Вĕсем планпа пурăнаҫҫĕ, планпа ĕҫлеҫҫĕ, ҫавăнпа та пур йеннипе те ҫĕнтерсе ҫитĕнӳсем туса пыраҫҫĕ. Пайантан вара пирĕн те планпа „ĕҫлемелле“ пулать, планне ҫырсах тăвăпăр. Ҫыр, Ҫеркей Иванăҫ!—терĕ Тимахви пуп умне хутпа кăранташ хурса.

Тытăнҫĕ пуп ҫырма. Малтан иккĕшĕ канашлаҫҫĕ, унтан решшени йышăнаҫҫĕ, пĕр сасăпа йышăннă решшенисене пупĕ хут ҫине ҫырса пырать.

„Пирвайхи ҫеретри ĕҫ вăл Йăваш Ивана леш тĕнҫене ăсатасси. Ку ĕҫе пайанах тума пулать. Ыран не йапĕрĕн ҫиҫҫĕмĕшĕнҫе вĕсен праҫник пулмалла, ҫав майпа хуларан кам та пулсан токлат тума килĕ (ҫулленех килнĕ), токлаҫĕ паллах кĕҫĕрех вулав ҫуртĕнҫе пулать, унта йаҫейккă ҫекреттарĕ Йăваш Иван пулатех; ҫавăнта Ивана ҫӳреҫе виттĕр лектерес пулать; пăшал опрески Тимахвинне илес, пеме Кăҫтук Петĕрне хушас,—вăл хамăр ҫын. Пирĕн ҫине никам та шутлама пултараймасть, потому што епĕр вăл вăхăтра кунта ерех стакканĕсем ҫумĕнҫе пулатпăр“ тесе ҫырса хуҫĕ пуп пирвайхи пунктра.

Иккĕмĕш пунктĕнҫе ҫапла ҫырҫĕҫ:

„Лешĕ Максăм Микулине—колхос претҫетаттĕлне ҫывăх кунсенҫех вĕлерме пулать. Ăна пĕр каҫ йепле те пулсан улталаса Хĕрлĕ ҫарти Йехвин арăмĕ патне кӳртсе йарас, вара—„йут арăм патне кĕнĕ ҫынна тытрăмăр“ тесе пысăк шавлу тапратас. Ун пек ҫĕре халăх ҫĕрле ҫасах пухăнать, тата хамăр ерттелти ҫынсене пухăнма хатĕрлес, вĕсем пухăнсан ҫапăҫу тапратмалла пулать; ҫав вăхăтра ҫын курман вăхăтра Максăма айакран ҫĕҫĕпе йашлаттарма пулать. Ку ĕҫе органисатсилеме Ҫеркей Иванҫа хушас,—вăл Йехвин арăмĕпе йунашарах пурăнать, ҫавăнпа вăл ку ĕҫе ҫăмăллăнах тума пултарать“.

Виҫҫĕмĕш пункт: „Хĕле кĕреҫҫен колхосăн вăрлăх фонҫĕ выртакан пысăк склатне ҫунтарса йарас. Ку ĕҫе тума Паймушкассинҫи Кирккана хушас, вăл иртнĕ ҫул ку оппăта хайсен йалĕнҫе туса пăхрĕ. Киркка ваҫҫи укҫа пуҫтарма хамăр ерттел хушшинҫе халех тытăнас“.

Тăваттăмĕш пункт: „Ҫывăх кунсенҫех йалканаш претҫетаттĕлĕ Ваҫҫа Иванĕ ҫинҫен,—вăл вҫатккă илет,—тесе хыпар сарса йарас. Кама та пулсан хамăр ерттелтен вҫаткă панă пек тăвас. Ҫапла йатне пăссан, ăна претҫетаттĕлрен тен кăларса та сирпĕтĕҫ“.

Пиллĕкĕмĕш пункт: „Куллен кун халăх масси хушшинҫе пĕтĕм тавраri йалсенҫе мĕнле майпа та пулсан ҫак хыпарсене сарас пулать:

а) Раштав тĕлне вăйлă вăрҫă тапранмалла, вара вăрҫа ҫи малтан колхоҫнĕксене илсе каймалла, вăрҫă пулнă майĕпе опликатсисем пăрахăҫа тухмалла, пере-

## Тӳмесем ҫеҫ тухаҫҫĕ



— Мĕнле вара сирĕн коппиратив лапкинҫе тӳмесем ҫук? Сирĕн ҫук пулсан ăҫтан тупасха ĕнтĕ?

— Есĕ пуп патне кайса пăх. Вăл кашни выроарникунах ҫиркӳ крушкисенҫен тӳмисем кăларса пырать. Нумай пулмасть ман пуҫанана икĕ тӳшин сутнăҫҫĕ.

кет кассинђи укçасем çухалмалла, тырпул ытла хакланса каймалла; у) çитес çуркунне мур килмелле, вара мурпа ђи малтан турра ӗненмен çынсемпе пупсен вӗрентнине ӗненмен çынсем вилсе пӗтмелле.

Çак хыпара сарни пирӗншӗн калама çук усӑллӑ пулмалла. Тен вӗсене карђӑксемпе стариксем те пур те ӗненмӗç те, ку ђухне пустуйа ӗнентерме йывӑр, çапах та...

Тин çеç çырма тытӑннӑђӗ улттӑмӑш пунктне, пӳрт алӑкӗ йар уçӑлса карӗ те, пӗр шинеллӗ çын, кӑвак тӑрӑллӑ хӗрлӗ кӑшкарлӑ картус тӑхӑннӑскер, алӑкран кӗрсе сӗтел умне утса пыђӗ те, лешсен умӗнђи „плана" йарса та илђӗ. Ун хыççӑн пӳрте йалканаш претçетаттӗлӗпе Йӑваш Иван пырса кӗђӗç.

Кусене курсан, Çеркей пуп хӑранипе кӑпӑр-капӑр сӗтел айне ђӑмрӗ; Тимахви малтан çӑварне карса йупа йевӗрлӗ хытса ларђӗ, унтан сиксе тӑрса сӗтел çинђи çӗççе илсе ывӑткӑнђӗ Иван çине. Унђен те пулмарӗ, шинеллӗ çын Тимахви аллинђи çӗççе револљвӗр кӗпçипе çапса çӗре ӳкерђӗ те, кӑкӑрне револљвӗрпа, тӗллесе—„стой, вырӑнтан та ан тапран. Епӗ, саккун хушнипе сире арӗслетӗп!"—терӗ.

## Паллӑ кун?



— Çмирнова, пайанхи кун мӗнрен паллӑ?

— Пайан „Паскав" колхос çумӗнђи (Сӗнтӗрвӑрри районӗ) Осоавиахим йађейкки çывӑрма выртни çулталӑк тулђӗ. Вӑл халӗ те вӑранман-ха. Çавӑнтан паллӑ.

Йагташ

Çавӑнтах йалканаш претçетаттӗлӗпе Йӑваш Иван Тимахвин аллисене кайалла çыхса хуђӗç, унтан пупне сӗтел айӗнђен сӗтӗрсе кӑларса аллисене çыхрӗç.

— Акӑ мӗнле план тунӑ клас тӑшманӗсем, маларах çитмен пулсан кӗçӗр Иван Йекорӑђ пуçне çийеђђӗç тӑшмансем,—терӗ уполномођӗннӑй лешсен планне йулташӗсене вуласа парса.

— Мӗн ђухлӗ контрреволљутсиллӗ акиттатси сарса çӳрерӗç халӑх хушшинђе... Ленкрӗç тин, çӗлен калтасем!—терӗ ӑна Йӑваш Иван.

Çав кунах леçрӗç арӗслесе Тимахвипе Çеркей пупа хулана.

— Ӗнерхи тӗслӗх сире, йулташсем, нумай йапала çинђен каласа парать. Куштан Тимахвипе Çеркей пуп хатӗрленӗ план клас кӗрешӗвӗ çивӗђленсех пынине тата ку вӑхӑтра клас тӑшманӗсем хӑйсен сийенлӗ ӗçӗсене тӗрлӗ майпа тунине есир лайӑх куртӑр ӗнтӗ. Çак урока асран йамасӑр пирӗн пурсӑмӑрӑн та пролеттариллӗ сисӗмлӗхе тата ытларах вӑйлӑлатмалла. Клас тӑшманӗн сийенлӗ ӗçӗсене çийӗнђех тӑрӑ шыв çине кӑларса пымалла, вӗсен сийенлӗ акиттатсине çийӗнђех çапса аркатса пымалла. Пире комунисла партти çеç тӗрӗс çулпа йертсе пырать, партти панӑ тирективӗсене пурнӑçа кӳртсе пырсан çеç епӗр çитӗнӳ хыççӑн çитӗнӳ туса пырса телейлӗ пурнӑçпа пурӑнӑпӑр. Тађӑрах çыхӑнар комунисла партти тавра!" тесе пӗтерђӗ уполномођӗннӑй хӑйӗн токлатне.

## Лаша шалӑпи

Ентри-йал (Канаш р.) колхосӗн хӑш-пӗр прикатӑсенђе лашасем талӑкшар выçӑ пурӑнаççӗ. 7-мӗш прикатӑра 17 лашаран кӳлме йурӑхли 1—2 лаша çеç. Кӳлмелли хатӗрсем çук. Выљӑх апађӗсене вӑрласа пӗтернисем те пур. Кусем пирки актӑсем те çырнӑ, анђах ку тарийђђен те ӗçе йӗркелемен.

Йӑпӑр-йапӑр пӗр хут татӑк
Тыттарђӗ алла,
Хуђӗ çине ак çакӑн пек
Çырнӑ пӗрлешсе:
„Çиђђӗмӗш прикатӑн
Коњухсем нађар,
Сӗлӗне вӑрларӗç,
Тӑма вырӑн çук.
Кӗç-вӗçех кайатпӑр
„Тарӑн çырмана",
Пӗртте утаймастпӑр,
Ђӑн выçӑпала.
Талӑксӑр курмастпӑр
Шывпала апат.
Таврашсем пит йапӑх
Кӳлсе тухма çук!

К. В. Аванов

Ретаксирен:

Çиђђӗмӗшӗн—прикатирӗ
Питӗ „пултарать" иккен.
Хупламасти сурӑх тирӗ
Кулакла ӑша-ђикке?
Колхоçнӗксем, тытса пӑхӑр—
Прикатир çак мӗнлескер?
Коњухсем тата кам йӑхӗ?
Ахаљ мар вӗсем тискер.

# Йĕплĕ çăмаҳ хыпакансем



— Тĕп стантси! Ђентраљнăйă!.. 30 минут шанкăртатап. Илтместĕр! Тĕп стантси! Тĕп стантси!..

## Пуштă çавăрнăшĕ

Афанаçйĕв Й. çырса пĕлтерет:

„Елĕк районĕнђи Ваçкасси йалне Ђăваш респуплĕкĕнђе тухса тăракан хаçатсем иртнĕ çулта икĕ кунтанах çитсе пынă. Ун ђухне Ваçкасси пуштă акĕнствине Елĕкрен тӳрех леçсе паратђĕç. Çавăнпа та ун ђухне йалта икĕ киле пĕр хаçат ытларах та килетђĕ. Анђах халĕ Елĕкрен Ђăваш-Сурăмне, унтан Ваçкассине тин пырать. Çитменнине, пуштисем йапăх ĕçленипе, ернерен йе ытларахран çех çĕнĕ хаçатсем курса вулатпăр. Çав майпа халĕ Ваçкассинђе уйрăм çынсенђен никам та хаçата çырăнса илекен çук“.

— Иртнĕ çулсенђе пурте пекех çырăнса илетпĕрђĕ, теççĕ Ваçкасси колхоçнĕкĕсемпе ĕçхресђенĕсем ĕнсисене кăтăрт-кăтăрт хыçса кăçал.

Ваçкассисем, хăвăрăн ĕнсӳсене мар, пуштăра лараканнисен ĕнсисене хыçса йамалла сирĕн тимĕр шăртран тунă шђуткăпа хытăрах пусса.

## Мĕншĕн кулатăр?

Романсем çыракан Анаттољ Франсран ыйтнă:

— Мĕншĕн есĕ хăшпĕр ђухне хăвăн пӳлĕмре ытти çынсем пуррине манатăн?—тенĕ.

Вăл каланă:

— Епĕ пуçпа хытă ĕçлесе ларнă ђухне ытти ĕçсем çинђен пĕтĕмпех манса кайатăп, тенĕ.

Тутаркас районĕнђи хăшпĕр претçетаттĕлсем пуçпа Анаттоли Франс пек хытă ĕçлемеççĕ пулин те, хăйсем çисе ларнă вăхăтра ытти çынсем те çийесшĕннине манса кайаççĕ.

Ђемей йалсоветĕнђи уђитлĕсем 3 уйăх хушши ĕç укçи илеймен. Ĕç укçи паманни пирки уђитлĕсем йалсоветне коллективлă сайавлени те парса пăхнă. Анђах йалсовеђĕн претçетаттĕлĕ Пойккин Й. уђитлĕсен ыйтăвне хакламан.

— Укçа пухса парăр, вара илĕр!—тенĕ нумай ăссăр Пойккин Й.

Пойккин тус, ытла „пойкки“ ес. „Пойкки“ пулса ху 3 уйăх çимесĕр пурăнха.

Калайкас йалсовеђĕ уђитле, 3 техниђкăна октăпĕр, нойапĕр уйăхĕсемшĕн ĕç укçи памасăр тытса тăрать.

— Йал хушшинђе сысна тирне сӳме кайăр, кайран паратпăр, тесе тăрăхлать.

Калайкас йалсовеђĕ, пит аван калană санăн çинђен Кокăљ писсаттĕлĕн пĕр происветенинђе:

— Мĕнрен кулатăр! Хăвăртан кулатăр!

Ç. К-в.

## Çухалнă.

Шырарăмăр, шырарăмăр, тупаймарăмăр! Мĕн? Малалла итлĕр!

Çĕрпӳ районĕнђи I-мĕш Вăрманкас йалсовеђĕ ашкакай хатĕрлевĕн 4-мĕш кварттăл планне 8% çеç тултарнă. Намăсĕ ăçта çухалнă-ши унăн?

Оппортунис лађакине ӳксе йулнă пулмалла.



Çав вăхăтра Шупашкарти телефон стантсинђе шăп. Пĕр телефон хĕрĕ тăве пек анасласа сывлăша йантратса йани çеç илтĕнет...

*Н. Васанкка*

# „Касанскисемпе“ „таварна кĕписем“

## тата вĕсен Аҫкешри кĕрӳшĕсем

### Ҫтаппан Миххалҫҫăсен 1-мĕш петтилеткă иттокĕсем

Халăх ҫине тухса, пысăк сопранире, пайанхи кун вĕсем, ĕнтĕ (кăнтăрла мар, ҫĕрле те) отҫот туса парас ҫук. Анҫах хăйсен ĕҫĕсен иттокĕсене хисепе илсе тухаҫҫех, ăна вĕсем пит те ăста тăваҫҫĕ. Пĕрремĕшне иттокласа 2-мĕш петтилеткăна план пекки тумасăр кĕрес ҫуках вĕсем те.

Ҫтаппан Миххалҫҫă пĕтĕм Аҫкеш йалсовет пăханлăхĕнҫи халăхшăн паллă ҫын. Шупашкар районĕсем. Ытлашши шарламасть, шăпăртах... вăл паҫах сăмах ҫĕнми пулса тăма та хатĕр, йе, ҫав хушăрах, каластăк—пĕрре касса тататть те вăл—вирлĕрен те вирлĕ, тата калама ҫук ытарлă ҫатлаттарса хуратть сăмаха.

— Ф-у-у! пит те сиввĕн туйăнать ҫав умра, хул пуҫҫи ҫине хурса ҫава ҫĕклесе пыни,—тесе кам та пулин сăмах пуҫла кăна,—вăл тӳрех:

— Сивĕ пулсассăн, кус, еппин, кăмака ҫине улăхса выртт, тет те, пĕррех касса тататть. Халҫхи самана ҫинҫен унăн йуратнă халлапĕсем пур:

„Сысна самăртсассăн хăй хуҫине те туллать, теҫҫĕ“—ҫавна илтнĕ-и есĕр! тет, йе: „каҫхине акă, выртса сывăрас умĕн епĕ хам пӳрт умне патаксем тире-тире тухрăм та, ирхине тăрсассăн, пăхатăп—хай патаксем ман сип-симĕс ҫулҫă кăларнă вĕлкĕшсе лараҫҫĕ“, тет. Унăн политтĕкĕ те ҫавăн пекех ытарлă, кирек хăш йенҫен пăхсан та йака пек! (анҫах сийенĕ конкретлă та, пысăккă вара).

Халҫхи саманашăн ку вăхăтра ҫи сийенлĕ пулма пултаракан йапала вăл, ҫав Ҫтаппан Михалҫҫăсем. Ҫавсен отҫоҫĕнҫе актив хисепне 5-мĕш паракрăф-па леккелекенсен (комуниссемпе комсомолĕссем) Аҫкешре ҫавна питех шутласа тăмаҫҫĕ.

Йе пĕтĕм ҫунне парсах тенĕ пек Совет майлă, ҫиркӳпе пупсене хирĕҫ те ĕҫленҫи тăвать вăл, йе, ҫав хушăрах, пупсемпе аппаланма тытăнать те, Онесĕм Мĕтрипе Лексей Кераҫҫĕмҫсемпе пĕрле ҫупса, хупăннă ҫиркĕве уҫтараҫҫĕ. Пупне тупса килсе хăй килĕнҫе усрать; хушăран тата пупне хăйĕн кĕрӳшĕ—Фетăр Йекорҫ патне леҫсе те ҫыс тăвать.

Ҫакнашкал етем ĕнтĕ, ҫĕнĕ ҫул ыран тенĕ ҫухне, тĕлĕре тĕлĕрех măкăртатса, хăй йевĕрлисен 1-мĕш петтилеткă вăхăтĕнҫи ĕҫĕсен иттокĕсене хисепе илме тытăнҫĕ.

...Комуниссен парттин Шупашкар райкомĕ касански ыран тенĕ ҫухне, тата ытти вăхăтсенҫе те, Аҫкеше пырса, йаҫейккă пӳро ларăвĕсем иртерсе, мĕнле ĕҫлемеллисене тĕплĕн кăтартса хăварнă пултăр;

...Йалта комуниссемпе комсомолĕссен йаҫейккисем, вăрҫăллă турăсăрсен йаҫейкки, колхосĕ те ĕҫлесе пынă пултăр. Пĕтĕмĕшпе илсессĕн,—вĕсем ҫăн-ҫăнах пире хирĕҫ хытах кĕрешсе пынă пултăр, ...халăхĕ те хаҫат-шурналсем вуласа, ликпунтсене ҫӳресе те, халҫхи политтĕке ҫылай ăнкарса пыракан пулнă пултăр, вулав ҫурҫĕ, 2—3 уҫитлĕ пулҫĕрех...

Ҫапах та—пирĕн ĕҫсем,—тет Ҫтаппан Михалҫҫă хăйĕн отҫоҫĕнҫе—пирĕн ĕҫсем, тет, акă йепле хамăр майлă пыраҫҫĕ. Ҫĕпĕте-ҫĕпĕте ҫеҫ пулсан та кĕрешсе ҫĕнтерсе пынине, хăйсен кĕрешӳ палансĕн активне вăл пайанхи кун, хыттăн кăшкăрсах, хисеплет.

**Пĕрремĕшĕ**,—тет Ҫт. Миххалҫҫă,—пирĕн активра акă пул пур, унпа пĕрлă ҫиркӳ ĕҫне тăвакансем, таврари кулак-лишонтсăсем тата хамăр епĕр—вĕсен ĕҫне туса тăракансем.

**Иккĕмĕшĕ**—йалта пĕр паптис (Иван Макҫимҫ) тата таврара ҫектанткăсем пур, вĕсем те пирĕн ĕҫех пулăшса пыраҫҫĕ.—Вĕсене те епĕр иккĕмĕш петтилеткăна, сотсиалисăма илсе пыма, „классăр опҫăна“ кĕртмешкĕн мĕнпур вăйа хурăпăр...

**Виҫҫĕмĕшĕ**—йалти вулав ҫурҫĕ районăн ҫĕнĕ ҫентăрне—Кӳкеҫе куҫни те ҫав тарасана пирĕн йенеллех тайăнтарнăн туйăнать-ха.—тет Ҫт. Мих. Ҫурҫĕ пупăн пулнă пулин те, уншăн ¦ пупне халĕ урăхларах условисенҫе усрама тивет пулин те, ку ĕҫĕ ытларах пире йӳнев.. пире ал майĕ пулса пыратть. Атту унта пире хирĕҫ вăй хытăрах ҫăмăртăнма пултаратҫĕ, тепĕр йенҫен тата, пупне хам патăмра усраса, йе хам кĕрӳ Фетăр Йекорҫă патне куҫаркаласа ҫӳресе, хваттер ăшшишĕн те пăртак илкелетпĕр, канашлăвĕсем те,—кирлĕ пулсан, конеҫнă, кирлĕ вăхăтра—хамăр килтех тума пултаратпăр.

**Тăваттăмĕшĕ**—мĕн авалтан пыракан тĕшмĕшле йăласемпе тĕн праҫникĕсем пирĕн ĕҫех тăваҫҫĕ. Акă: туй, таварна, аҫа тĕне кĕртесси, тапă, ҫимĕк, кшарни, касански, арханҫа микулăн, сурхури, ветени турамăшне ҫуратни (мăнал йанравĕ), ҫăварни, мăнкун, илен кунĕ, петравкка, спас,ҫĕнҫул... вĕҫĕхĕрри те ҫук, вĕсем нумай.

**Пиллĕкĕмĕшĕ**—ку ҫи пысăкки вара,—тет хыттăн, сассине ҫĕклесех Ҫт. Михалҫҫă—ку—ĕҫкĕ, пйанствă. Пирĕн туссем—активлă пйантсăсем. Комунис йе комсомол пилеҫĕсем кĕсйене ҫиксе ҫӳресех, вăрҫăллă турăсăрсен сойусĕн йаҫейккă пӳро ҫленĕ йатне илтсех—пирĕн ҫемĕпе, епĕр алă ҫупнипе ташлакансем, оппортуниссем ҫи паллă вырăн йышăнса тăраҫҫĕ пирĕн ĕҫре.

**Улттăмĕшĕ**—ĕҫ прокулшҫĕкĕсем, лотăрсем, вреттиттĕлсем, растратҫĕксем т. ыт. асăнма тивет...

Колхосĕнҫе уйăхсерен тенĕ пекех улшăнса пыракан савхосĕсен: Мишшин, Илйински Йевстафи пеккисен „алхыпанĕсем“ вăлта ҫекли йевĕрлĕрехи, уколовни ĕҫсене йĕрлесе тĕрĕслекен тытăмсем йĕрлессишĕн питех хыпманни те савăнтарать...

Ҫакнашкал вăй-халпа епĕр фронт тытса, ҫикĕ лешйенҫен килекен сывлăшпа ҫунатланса та, малтанхи петтилеткăна 5 ҫултан та ытлараха тăсассишĕн кĕрешрĕмĕр... тет токлатҫĕк.. Тен, тепĕр йенҫен пăхсан, кăштах йăнăшрăмăр теме те йуратть пулĕ те, хăй петтилеткăна вăрăмлатас тĕлĕшпе

калатăпçке—мĕншĕн тесессĕн ăна хăвăртрах туса тăкса, иккĕмĕшне—„класлăхсăррине" курма, леш, пирĕн тăшмансен (комуниссен) сылтăммийĕ пулса, пирĕн çывăх туссен шутнех пырса лекнĕ **Н. И. Пуххарĕн** каларĕш, хамăр упранса, ђасрах, тўрех сотсиалисăма ўтленсе пырса пĕтĕçесси тĕлĕшпе урăхларах планланăн тухаť пек те... сарлакăшпех те тата вопђĕм илсессĕн, çапах та пирĕн çĕнтерўсем пысăк,—тет Çт. Мих. мăнă сасăпах. Ăна ĕнтĕ, Çт. Михалђăна çĕнçул каçхи сопранире, таçта, сопор пекех пысăк ђиркўре, отђот тунăннах туйăна пуçларĕ ку тĕле çитсессĕн.

Вĕсен, Çтаппан Михалђсен, пысăк та ђи **малтанхи** вырăнти **çĕнтерĕвĕ** иккен—1930-мĕш çулта, прихотри ђухăнсемпе вăтамсем алă пусса хупма йышăннă ђиркĕве тепĕр хут уçтарса, тĕн машшинне тепĕр хут вирлĕн хута йани пулса тăраť. Ку ĕçе—ĕлĕкхи страшнĕк, çĕр тара илекен пулнă, 1917-мĕш çултанпа лишонтсă-ђиркўçĕ Лексей Кераççĕмђ хытă тăнипе тата Онеçĕм Митрисем пулăшнипе тунă. Лексей Кераççĕмђĕ те ĕнтĕ, шайтан, тесе вăрçса та илет токлатђĕк хăйĕн тусне—малтанах, хăй ђиркў хуралçи пулса, ђиркўре калпак пах çўренĕ вăхăтсенђе аллине ăшăткаларĕ те, халĕ, унтан сирпĕтнĕ хыççăн мур илесшĕ, тата пире хирĕç те палкама пуçларĕ те...—çапах та ăна ђиркўшĕн хăй вăхăтĕнђе вирлĕ ĕçленĕшĕн пысăк тав...

**Иккĕмĕш çĕнтерў**—колхоса хирĕç кĕрешсе пынă çĕртех, унта хамăр çынсене кĕртсе «суйлав прависем» илни пулса тăраť. Халђ кăна асăннă Лексей Кераççĕмђђăна страшнĕка, лишонтсăна Алђкешри Ђаваш Тĕпĕçтăвком йађĕпе тăракан колхоса кĕртсе, суйлав прави партартăмăр. Колхосне шалтан сирпĕтсе кăларма майласа çитерсессĕнех, пирĕн Кераççĕмђђăсем колхосран тухаççĕ, хамăр туссем—Пĕђĕк Анађри Макçимăвсем тата Меф. Ваççилйĕвсем пулăшнипе (вĕсем çинђен малалла та ђаранса тăрăпăр-ха), А. Кераççĕмђђăсене çав куннех колхос çĕрне касса памалла та тугаратпăр. Правленипе ревкомиççи хушшинђе ун ђухне кушакпа йăтă хушшинђи пек тусанлă çилтăвăл çавăрттарма пуçларĕ вĕт,—тет пек токлатђĕк Çтаппан Михалђ.

**Виççĕмĕшĕ**—колхосра ĕç укçине кун тăрăхах валеçмелле тăвассишĕн кĕрешни, тĕрлĕ кампанисене срываť туни. Çураки хатĕрлевне мăнкун уйавĕ çине куçарни, Мăн Шахђарти „Тинамă" колхоспа хамăраннисене сотстокăвăр тума кансĕр лени, т. ыт. тырпул пуçтарса кĕртессисене тем пекех вăраха тăсни, сакоттовккă сатанисене йетак тăрăх сулса пухтарни те—пурте пирĕн ĕçе пулăшаççĕ.

Примерпа кăтартас пулсассăн—хамăра лахлатса кулмаллăх мыскарасем те тунă. Акă çакна илер. Колхосăн çум çумламалла, тейĕпĕр. Утмăлтурат пусса илсе кăнкăвак та ђап ђакăр çуталса ларсассăн тин çумлама тухаççĕ. Хăвалана тăрăх, кăнтăрлађђен пĕр 20 хĕрарăм тухас вырăнне, 12—14 хĕрарăм йăран хушшинђе курăнкалаť, каçала сулăнсан—7—8 çын та йулмасť. Кăнтăр кунĕнђех хăшпĕрисем сулхăнра выртаççĕ вара çуллă сăмаха çапса. Йурийех пыратăн та:—мĕншĕн кун пек ĕçлетĕр? тетĕн. Пирĕн плана тултарассишĕн, пирĕн йенелле туртăмласа ĕçлекеннисем, пирĕн фронт кĕввипе, пире хирĕç:

— Пире пурĕпĕрех мари, епĕр вĕт кунăн, кун шуђĕпе илмелле ĕçлетпĕр, теççĕ. Тĕрĕс те калаççĕ. Леш, пирĕн, колхос правленийĕпе активĕ матур вĕт, çум çумлас ĕçе çтелшђĕнă çине куçарма шутламаççĕ те, мĕншĕн тесессĕн вĕсем пирĕн лакăма кĕрсе ўкнĕ, йерçмеççĕ вĕт—„Касанскийе" «таварна кĕписем» тăхăнма хĕрсех хатĕрленеççĕ...

— Смирнов Лапсарский—халђхи йалсовет пуçлăхĕ пулмин, Калинăв—партйађейккăн халђхи çекреттарĕ, Константтинăв, тата çавăн пеккисем колхоса малалла пăртакках туртса пымасассăн, епĕр—ыттисенђен питех шикленсе тăмастпăр...

Сăмах куçрĕ токлатђĕкăн хайхи лађакана—оппорттунисăм, примирентсă, пйантсă, тĕшмĕшлĕх йăвине.

Çт. Михалђпа унăн пĕтĕм фронђĕшĕн Алђкешри уйрăм комсомолĕссемпе комуниссем те, йалсовет тата колхос аппаратĕнђе ĕçлекенсемех ђыслă керой пулса тăраççĕ.

— Пайан вĕсене пирĕн премилесси кăна йулаť,—тет токлатђĕк. Камсем пирки калаť-ха вăл. Акă: Мефоти Ваççилйĕв—Спритун Ваççилйĕв, Иван Никколайĕв, Константтин Лепĕтĕв—Иван Макçимăвсем, т. ыт. çинђен те асăнаť вăл. Вĕсем „йе пĕлсе, йе пĕлмесĕрех те (пирĕн пађăшкăсем: Лаврăвпа Çпăритонăв аттесем ђиркўре слушпă вăхăтĕнђе каларĕш) çылăха кĕрсе, пире пулăшса пыраççĕ. Тĕн праçникĕсем вăхăтĕнђе вĕсем, пĕтĕм ĕçне пăрахсах, йатарласа пĕр-пĕрин патне пухăнаççĕ те вирлĕн хăналанаççĕ. Пур хăват та вара çавăнтан...

1. **Мефоти Ваççилйĕв**—йалти партйађейккă çекреттарĕ пулнăскер 1931 çул совет суйлавĕ вăхăтĕнђе, хăй пуху наснађђĕт тăваť те, Попойне, худђкассине, ĕçке кайаť—лере кратăсне пит те хăватлă тыткалаççĕ иккен те,—суйлаву-кађку! Хăйамата—йађейккă çекреттарĕ унтах тăранса анаť.

Атăл леш йенђе 4 лав угă йăп! кăна çухалнине, хăй колхос пуçлăхĕ ђухне—савхос **Мишшинсем** пыл, тул çăнăхĕ, 120 пăт таран ыраш йăкăртнине, уђђот тавграшĕ ĕç те йĕркеленменнипе пăрса-йасмăксем хиртех намăса йулнисене, пĕтĕмпех манса кайаť. Пушар хатĕрĕсем, çĕр валеçнисем...

**Карппăвпа Антрей** пĕрле çĕнçĕре куçакан Ваççилйĕв Проххăр çĕрне арента илни, кресткомăн мар пахђанах **Климентйĕвсемпе** арентăна парса сутлашнисем.

Кустарнăй ерттелĕнне 755 шер тенкĕ таран таçта ђăмтарнă **А. Карппăвсемпе** пĕрле контрактатсиленĕ выђаха патшалăха памасăр тăнисем... Ака вăхăтĕнђе ĕçленĕ колхоçнĕкăн 3 кунне хăй (Ваççилйĕв) çĕтерсе йарса, колхосран тухма сăлтав тупса панисемпе, **Шашкин** текенскер колхоса кĕрекенсене вăрçтарнисем, апрелĕн 17-мĕшĕнђе ревиçи хыççăн Савелйĕв Кĕркурисем ўсĕр йăваланса айнех тула тухнисем, т. ыт. те—пăгранаççĕ кăна пуçмимминђе ерехпе хутăш.

Клас тăшманне çакă ĕнтĕ савăнтараť.

2. **Маťковпа Иван Никколайĕв**, комуниссем, хăйсен ађисене ђиркĕве илсе кайса йат хунă. Пушăн та тоххот пур, урăх йенĕпе те.

3. **Иван Макçимăв** (Пĕђĕк Анађ комунисĕ)—ађине малтан Алђкешре йађейккă умĕнђе октăприт тăваť (çĕнĕлле йат хураť) те, тпеĕр кунне ирех Шорђекаси ђиркўне кайса, хунĕпе—Меçникков кулакпа—йунашар тăрса, ађине, кивĕлле шыва ђиктерсе ђўхетерет. Çапла вăл—пупне те, партйађейккине

те, иккĕмĕш те харăсах ҫыс тăват. Ҫак Макҫимăвпа Ваҫҫилйĕвсем ĕнтĕ кулак-кĕрĕве, лишонтсăна колхоса кĕртсе, кăларсассăн та ҫĕр партарса хăтланаççĕ.

Колхоçнĕксен пухăвĕ кун пек ĕççемшĕн йатланă пулин те, Макçимăвĕ хăй колхос йаҫĕпе илнĕ 250 тенкĕ пирки отҫот памаллине халĕ те астăваймаст-ха.

4. **Лепĕтĕв Константтин**—комсомолĕс, Вăрçăллă турăсăрсен йаҫейкки ҫекреттарĕ, колхос правлени ҫленĕ, çҫоттовот, ҫав хушăрах кулакла елемент, сутăçă-лишентсă Тарас Филиппăвăн шăлнĕ мăнкун хушшинҫе ĕççе çӳрет. Унăннах касанскире ҫаплă тавăрнара ĕмĕрте асран кайас ҫук ĕç пулнă—вăл уринҫи аттине хывтарса илтермелле пулиҫҫенех пуçне сухатса кăтартнă.

5. Иртнĕ мăнкунта хĕрсе, утарлăн ҫуракине тухас тесе йышăннă пулин те, ун вырăнне хăшпĕрисем колхос правленине пухăнса унтах вăйлă ĕçкĕ-ҫапăçу туса иртернĕ. Акă ăна камсем лайăхах астума тивĕç: йалсовет пуçлăхĕн самеçтиттĕлĕ А. Никколайĕв, колхос правлени ҫленĕ М. Ваççилйĕв, И. Никколайĕв, Е. Константтинăв, М. Алексантрăв, тата Ҫĕнйал КҪШ уҫитли (колхос ревкомиççи пуçлăхĕ, ВТС пӳро ҫленĕ) К. Афанаçйĕв вĕсем пĕрле мăнкун ҫӳкленĕ.

6. Шупашкар райкомĕнҫен Аҫкеше пырса пӳро ларăвĕ иртернĕ хыççăн тепĕр куннех, ҫак ларура ларнисемех те: Ваççилйĕв, И. Макçимăв, Никколайĕв, хайхи Лепĕтĕв, Ваççилйĕв—ҫиркӳре „касански" слушпи пĕтнĕ-пĕтменех, Мефоти Ваççилйĕв, т. ыт. патĕнҫе ĕççе çӳресе хăналанса, пупсемпе кулаксен касанскипе кĕрешес вырăнне вăйлатмах пулăшнă. Ахаҫрен мар ĕнтĕ комсомолĕс-колхоçнĕк Ҫпиритон Тиххăнăвĕ лаша кӳлтерсе тухса, урам тăрăх катаҫҫи ҫупнă. Кон. Лепĕтĕв ҫак касански ырлăхĕпе ĕнтĕ урамра йăваланса çӳресе аттине сухатнă та.

**Кĕрхи касанскийĕ** каллех кусем пĕрле хăналанса иртернĕ. Макçимăвăн Мирон йатлă кĕрӳшĕ „турамăш праçникĕ йаҫĕпе тавăрнанă пынă. 1930 çултах каҫҫа кайнă хĕршĕн 1932 мĕшĕнҫе тавăрна тăваççĕ! Кĕреке пуçĕ Макçимăв комунис кĕреке хушшине кĕрсе Украх йăмăкран, „тавăрна кĕпи" илсе тăхăннă та:

„Алран кайми аки сухи,
Асран кайми пĕлĕш тантăш
Ай ĕçери..."

текен йуррине йарăнтарнă. Ун хыççăн тавăрна халăхĕ—кулакĕ-мĕнĕ пĕрлех:

Аки сухинҫен уйăрлас ҫук,
Пĕлĕш-тантăша ай манас ҫук
Ĕмĕр пĕрле ай пурнари!..

тесе шăрангараççĕ кăна. Макçимăвăн савăнăç çитсе пеҫĕ! Ку ĕçе клас тăшманĕ йерипенех шутарса пынине, хăйĕн Шорҫекассинҫи—хаклă тăванĕ Меçникков кулакăн итеолокийĕ кĕтесре, вăрттăн, шăл хушшипе ихиклетсе тăнине те асăрхаса йулаймарĕ. Меçникковсем тавăрнасемпе-мĕнсемпе „пĕлĕш-тантăш" комуниса хăйсен сулĕ çинех тавăрасшăн тапалашаççĕ мари...

7. Йаҫейккăсем, йалсоветҫĕ ĕçленине те шăлса хăвармалла мар. Вĕсем çине тăрсах тата аван ĕçлени те сахал мар. Анҫах та „пĕр кашăк тикĕт" тени пурçке-ха... Вăл вĕт тикĕҫĕ, краççинĕ шывран çăмăлрах, вăл çийелте йарăнса çӳретçке-ха... „усал хыпар утпа ҫупат" тенĕ пек. Ҫавсене çеç примерлăха илеççĕ-çке хăйсен револютсийĕ хирĕç плансен активне Ҫтаппан Михалҫҫăсем.

8. Раштав умĕн авă Аҫкеш йалканашĕ **„кам пĕрлешсе ĕçкĕ туса йурлаза çӳрет, вна 50 шар тенкĕ штраф** хуратпăр" тесе опесаттĕлни постановлени кăларнă. Тĕнпе кĕрешес ĕçе аминистратсиллĕхпе улăштарса та пулин кĕрешесшĕн-ха. Анҫах, йалсовет пуçлăхĕ ҫак постановленийе йалсем тăрăх ҫапса çӳренĕ вăхăтрах, йалсовет ҫекреттарĕ Африккан Никколайĕв тата хăшпĕрисем раштавне „во вçу" кĕрсе кайнă, хăйсене ĕçкĕ айне пусса ӳкермеллĕхех кĕрешеççĕ иккен! Ҫакă вăл—кашăк тикĕт!.

9. Кун пек тавăрнасем, раштавсем, мăнкунсем, кампанисем, Меçникков итеолокийĕсем... кивĕ пурнăç йулашкисем асăннă керойсем хыçĕнҫен сĕтĕрĕнсе иккĕмĕш петтилеткăлла шăвасшăн

Йăла, çемйеллĕ пурнăç картишĕнҫе те вĕсем халиҫҫенех çапкаланса пыраççĕ. И. Никколайĕв комунис па К Лепĕтĕв комсомолĕс малтанхи арăмĕсене уйăрса йанă та, иккĕмĕш арăмĕсене ĕлĕкхи саманари пек пăхăнтарса пурăнасшăн. И. Никколайĕвпа М. Ваççилйĕвĕ хĕрарăмсене хĕнес ĕçе те манса хăвармаççĕ. Кăçал арманта И. Никколайĕв арăмне хĕненĕ. вĕсем кӳрентернĕ хĕрарăмсем те сахал мар...

10. Тата тепĕр керой ĕçне манмалла мар ку йалта. Вăл **Муравйов**,—ҫухăн çынах, тйаккăн çуртне торкипе сутнă ҫухне ҫылай йапала хăйне ваҫҫи илсе тăкса, укçине тӳлемесĕр хăтланнăшăн колхосран кăларнăскер.—Кун хыççăн пĕтĕм актива хирĕç пăлханма тытăннă керой вăл.

Ҫакăн пек ĕççем çине пит те уртăнаççĕ вара Ҫт. Михалҫҫăсен 1-мĕш петтилеткăри иттокĕсем. Ҫавнашкал ĕççене клас тăшманĕсем керойлăх ҫысĕпе ҫысласçĕ.

Пĕр шарламасассăн—паҫах шарламаст Ҫт. Михалҫ. Калас тăк вара—ҫăтса çех тăр! пит те вирлĕн çыпăçтарса хурат.

— 1933 мĕш çулта ак, партти тасатăвĕ тĕлне, ҫак асăннă йулташсен кăмăлнех пĕр пы-сăк хуран ханша çакса хурас пулат пулĕ, ҫисткăран вĕсем тасалса «тавăрна кĕпи» тăхăнса тавраннă çĕре,—тет вăл, ҫак комунис пулнă çынсене пур тĕлĕшпе те хăйсен фронтне тăратма ĕмĕтленсе. Тата вăл:—тепĕр хуран ханшине акă—иккĕмĕш петтилеткă урлă сотсиалисăма, классăр опҫă ӳтленсе кĕме тапаланакан хамăрăн икĕ телейлĕ фронта ваҫҫи çакса йарас,—тет.

Ытарлă калат Ҫ. М., тăрăхлат те вăл, анҫах çакă пит те лайăх пăларат:

Хатĕрленеççĕ вĕт вĕсем, клас тăшманĕсем,—кивĕ тĕнҫе йулашкисем хатĕрленеççĕ самайах иккĕмĕш петтилеткăна!

Пирĕн те вирлĕрехххĕн кĕтсе илмелле мари вара ҫисткине те, иккĕмĕш петтилеткине те!..

Тĕрĕс вĕт! Иккĕмĕш петтилеткăра „тавăрна" „касански" тымарĕсемпе вĕсен „кĕрӳшĕсене" çине тăрсах та тĕплĕрехххĕн тăпăлтарма хатĕр тăрас пулат.





Н. Майак

# Ăслă-пуçлă-тăнлă çын.....

Манăн фелйетонри геройăн—хисеплĕ Капиттонăвăн кас выртсан, çавнашкалах кăнтăрла та, етем тени çывăрман вăхăтра ыйхи килнĕ теме никам та пултараймасть. Çирĕплететĕп, ђăнах та çапла пулнă. Çывăрма мĕн выртсан та, леш çивĕђĕ, йĕп сăмсаллă пăрса çыртнă пек, корт!—сикнĕ.

— Йетĕрне майрисем сана таçта та çавăрса кайĕçĕ ара,—кăшт ђĕпĕгнĕ ăна арăмĕ татах айаккинђен. Леш тĕпĕл-тепĕл сиксе тăрса каллех тарăн шухăша кайнă. Сарлака çамки çине пађ пуснă шевĕр пÿрнипе, йанаххине тĕкĕленĕ ђышкипе.

Ђанах та шухăшĕ питĕ тарăн пулнă унăн. Историксенђен кайа çĕмĕрмен пуçне. Тем тĕрлĕ фискултура прийомĕсем те туса пăхнă вăл çав вăхăтра. Кăнтăр к у н ĕ н ђ е татах хытă асапланнă К а п и т т о н ă в тарăн шухăш ђирĕпе. Йатлама та пĕлмелли çук çынна. Арăмĕ те мăкăртатнă хайхине.

— Мĕн çав тери есĕ... Уйрăлмах шутлатнихе.

— Ан сÿпĕлтет-ха есĕ çав, епĕ 100 тенкĕ!..

— Ах, 100 тенкех тухмари ĕнтĕ хаљ панкăра!—кăшкăрсах йанă арăмĕ пуклак пăшатанпа айаккинђен тĕртнĕ пек.

— Ђа-а-ăп!—кăшт кăна хуплайман арăмне çăварне пуçĕнђи карттусĕпе Капитгонăв.

— Алиментă лекнĕ ĕнтĕ хăйамат, 100 тенкĕ шыйăраççĕ пулĕ. Çавăнпа çĕрсемпе аташать,—ђашкăрнă хăйне ăссĕн арăмĕ.

Йепле ăна кĕртĕн ара ђарусăр хĕрарăма. Çыннин пађах урăх шухăш таха.

* * *

Вăл вăхăтра Капиттонăв тарăн шухăша кайни çиђĕ кун та çиђĕ çĕр иртнĕ. Çамка тирĕ те самайах çÿхелнĕ ĕнтĕ унăн. Леш шухăш тымарĕсем те унаљ пуçĕнђе çĕлен çип пек кăна çинçелсе йулнă пулнă. Сасартăк ђăхаран хăранă пек тапса сикнĕ Капиттонăв. Пĕрех пенĕ урине маљђана. Ар-çури пек çухăрса йанă:

— Çĕр-р-р-р! Çер-р-р-р!!

Паг пуснă каллех сарлака çамкине шĕвĕр пÿрнипе.

— Урăх, урăх нимĕнле ăс та тупас çук. Ђи паха мĕл,—текех ђараннă пуçне çĕмĕрме.

Хÿрине кăна тĕвĕлене вара Капиттонăв Орапакассинђи (Йетĕрне районĕ) Ваçли Кантрађă патне.

* * *

Çитмелли çĕре çитнех вăл.

— Ваçли Кантрађ! - А, Ваçли Кантраљ.

— Ађашланнă Капиттонăв. Кушак пекех йапăлтатнă.

— Е-пĕ сиртен пĕр пулăшу ыйтасшăн.

— Ой, ан калах. Хамăн та анђах лаша ÿксе вилђĕ.

— Во-во! Тăхтаха. Çавăнпа та... Санăн лаша вилнĕ. Сăлтав лайăх. Вăт мĕн:—манăн çĕр тенкĕ сайом опликатсийĕ пур. Санăн лаша вилнĕ май сана опликатси сутма ђармаççĕ. Ђурпай йалсоветĕнђи комиççи опликатси сутма сана токкумент паратех ĕнтĕ. Вара вăл токкумĕнтпа манăн опликатсине сутатпăр. Унта с и п л е ш е т п ĕ р, ахалех пулмĕ,—çăвать Капиттонăв хăйĕн çĕр çывăрмасăр шыраса тупнă ăсне.

— Сана та хута кĕмесен ара. Майлаштарăпăр, килĕшрĕ Ваçли Кантрађ. Çĕр тенкĕ опликатси кăсйерен кăсйене куçрĕ.

Еç малалла шăвать. Тимĕр шапа утăмĕпе мар конешнă Ваçли Кантрађă та вĕçтерђĕ йалсоветне. Капиттонăв та хаваслањђĕ алă çапсах.

— Лаша вилђĕ... Лаша илме укçа... Опликатси сутмалла пулђĕ, ирĕксĕрех сутмалла ĕнтĕ, тен выљаса та илеттĕмђĕ пулĕ. 100 тенкĕ вĕт,—халапа ђăсать Ваçли Кантрађ йалсоветĕнђе, опликатси сутать çынăнне.

— О-о-о, ђылайах пулнă ара сирĕн.

— Илес тенĕђĕ те вăхăтра, тен выљаса та илеттĕмђĕ пулĕ. Халĕ тата çĕнĕ сайом та тем пекех илмелле те. Аптрал. Шоп—çапать Ваçли Контрађ ђĕркуççи çине аллине.

Пулăшу комиççинђи тăм пуççем тăмпа сĕрсех ĕненђĕç Ваçли Кантрађăн ђавса тăршĕ суйине. Вĕсемшĕн Ваçли Кантрађăн 100 тенкĕ таран сайом опликатсийĕ пулма пултарни çинђен пĕлесси масара кайтăр. Хăйсен сайома вырнаçтарса çитересси те нимех те мар, сайом сутма токкумент парса пултăр кăна.

Коттовă токкумĕнт, кай та сут сайом опликатсине.

— Ех, пулђĕ!—кролĕк пекех сикет Капиттонăв. Комсог токкумĕнт панă,—нушаллă çын, кайса сут кăна опликатси.

Çапла таха вăл, анђах сайом кайалла илекенсем те çав тери тăмсайсемех пулман. Капиттонăвах ленкрĕ. Мел шыраса пуçне çĕмĕрсе ыйхине татни харамах кайрĕ.

Тен апла хăтланман та пулĕђђĕ Капиттонăв Вăл финанс рапотнĕ вĕт-ха: Йетерне райфинпа йĕнђе, патшалăх панкин Йетĕрнери уйрăмĕнђе те ĕçленĕ етем вăл.

Çапла, пултарать Урапа-касси (Йетĕрне районĕ етемĕ;—урапи пађах айкалла ђупать. Ађи аван та сăмси пылђаклă çав.

---

— Иглетĕп-итлетĕп те епĕ ратио каласнинє вăл пÿрократ пекех туйăнать.

— Хăш йенђен?

— Мĕншĕн тесен итлессине итлеме ђулать ăн анђах хирĕç калама май çук.

# Кантӑк камантировкки.

Пахҫаҫимӗҫ сойусӗн лавккине мана прикашҫӗк пулса ӗҫлеме йаҫӗҫ. Карӑм. Тсехран происвот ствӑна хӑварсах карӑм. Мӗншӗн тесен вӑл лавккара та ҫитменлӗхсем ҫылай курӑнҫӗҫ йулашки вӑхӑтра.

— Ҫи малтан ҫуртйӗре сӑнсӑпата кӳртес пулаҭ,—терӗ мана ман пекех происвотзтвӑран лартнӑ ҫӗнӗ саветуйушҫи.—Вот кунта полккӑсем йапӑхса кайнӑ, алӑк уҫнӑ ҫухне илемсӗр ҫӗриклетет, нимрен ытла ҫӳреҫе кантӑкӗсене йӗркене кӳмелле...

— Конешнӑ, суту-илӳ ҫуртӗнҫе тасалӑх кирлӗ... тата ҫӳреҫесене кантӑк вырӑнне фанерпе питӗрсе лартни вӑл, пӗрре те килӗшӳллӗ йапала мар, терӗм епӗ ҫӳреҫесем ҫине пӑхса.

Лавккана ҫӑн та фанер ҫути „ҫутатаҭ", лампӑ ҫути пулмасан, тӑр кӑнтӑр кунӗнҫех сӗм ҫӗрлехи пек пӑҫ тӗттӗм.

Ҫӗнӗ шӑпӑр пах~~а~~-шӑлаҭ тенӗ пек, епӗр ҫӑнах та ӗҫе тытӑнтӑмӑр: полккӑсем йусанҫӗҫ, алӑк ҫӑриклетми пулҫӗ, алӑк умне ура хырмаллисем туса ҫапрӑмӑр, помешҫенире тӗрлӗ плаккатсем ҫыпӑҫтартӑмӑр. Анҫах кантӑк хамӑр алӑра ҫукки пит те тарӑхтара пуҫларӗ. Ерне иртет, иккӗ иртет, лавккара ҫавах пирӗн, тӗттӗм пирки, лампӑ ҫунаҭ.

СРК-на кайатӑп (саветуйушҫи ку ӗҫпе мана ҫуптараҫҫӗ), унтисем—пирӗн кантӑк ҫук—теҫҫӗ; кайатӑп савӑтӑн снапшени уйрӑмне,—пер листӑ ҫук—теҫҫӗ; вӑрман промхоса,—хамӑрӑн ҫӗнӗрен лартнӑ ҫурта та кантӑклаймастпӑр—теҫҫӗ. Аптранипе ФСС шкулне карӑм.

— Сирӗнне,—тетӗп,—пӗркунсене вӑрӑсем ултӑ йешҫӗк кантӑк вӑрласа кайнӑҫҫӗ, тен йулашки йулнӑ пулӗ, ҫавна хӑҭ пире парӑр.

Мӗн, есӗр кантӑк паҫӗҫ пулӗ тетӗри?

— Пирӗн хамӑрӑн га кашнӑ кун пӗрер куҫ ватаҫҫӗ ҫарусӑрсем,—тет саветуйушҫи.—Кай та ил Вӑрнарти хӑвӑр пек оттеленирен. Ултӑ йешҫӗк ҫухалнипе сан ӗҫ ҫук, ес хӑвӑнне ан ҫухат.

— Ҫапла, ҫапла,—тетӗп саветуйушҫине тавӑнсан,—кантӑк тупма май ҫук кунта. Кайас пулаҭ Вӑрнара.

— Вернӑ,—тет саветуйушҫи.—Епӗ унта пӗр ернеҫурӑ кайарах ыйтса йанӑҫҫӗ. Пайан ответ илтӗм. ҫиҫӗ листӑ пама пулҫӗҫ. Ыран ҫиҫӗ сехетри пойӑспа йарӑнтар.

— Тинех ӗнтӗ ҫӳреҫене кантӑклатпӑр,—терӗм епӗ ку хыпара илтсен.

Каланӑ пек, ирхине ҫиҫӗ сехетре килекен пойӑс ҫине ларса Вӑрнара шакӑлтаттартӑм. Мухтав телейлӗ ирхи сехете: ни пилет илнӗ ҫӗрте кӑсйери вунултӑ тенкӗ укҫана касса илмерӗҫ, ни ҫул ҫинҫе те пойӑс канава сиксе алурасӑр тӑрса йулмарӑм. Ҫавнашкалах Вӑрнарта та виҫӗ листӑ кантӑк пӗр инкек-синкексӗрех оттеленирен илсе тухрӑм. Кӑмӑл тулса килнипе, питех ҫийес килмест пулин те, столовӑйне кӗрсе, икӗ тенкӗ те 75 пус парса, апат ҫиме лартӑм.

Анҫах... анҫах ҫак вӑхӑтран пуҫласа ман ӗҫсем асӑҫусӑра куҫма тытӑнҫӗҫ.

Пӗрремӗш: апат ҫиме хӑтланса, кӗтсе ларса икӗ пойӑсран тӑрӑлса йултӑм. Вӑрнартан кун ҫуттипе тухмалла пулмарӗ.

Иккӗмӗш... иккӗмӗш вӑт хӑй тепӗр истори. Вакон ҫинҫе ҫурҫӗр иртсен виҫ сехетре мана такӑшӗ алӑран лӑкаҭ. Хам ларнӑ ҫӗртех ҫывӑрса пыратӑп. Ку шпана тавраш марши тесе, куҫсене уҫрӑм та тӳрех хам ҫумма тӑратнӑ кантӑк йешҫӗкӗ ҫине пӑхрӑм. Виҫӗ листӑ кантӑк ҫӑнах та пур, ҫухал ман.

— Краштанин! Есир ӑҫта ҫитиҫен кайаттӑр, пилетна кӑлар-ха?!

Мӗн тӑвас. Епӗ пилетсӗрех ларнӑха вӗт. Ларма та лармӑттӑмҫӗ те, мана Окуртсов, „Трушӗннӗкри" крушҫӗк, пӗтерҫӗ. Малтан 9 сехетрен пуҫласа 2 сехет ҫурра ҫитиҫен пӗр ҫывӑрмасӑр ҫеретре тӑтӑмӑр. Кайран стантсӑ тешурнайӗ пойӑс килес умӗн—ку 47-мӗш номӗр ҫине пилетсем сутмастпӑр—терӗ. Окуртсов калаҭ:

— Епӗ иртнӗ хӗлле, ҫапла пилет памасан та, Канашран пилетсӗрех ҫитрӗм, хӑйсем айӑплӑ паҫҫӑр пилет.

— Штраф!—тет контроҫор, пойӑс тайӑннӑ май сулкаланса.

Пӑхатӑп, Окуртсов манран айӑккарах, нимӗн шарламасӑр, аллинҫи квиттантсийе вуласа ларат. Контроҫор мана штравлатех.

Епӗ—сирӗн ҫукун ҫул ҫинҫе йӗркесӗрлӗх нумай,—тетӗп. Тӗслӗхрен илес, вырӑн та пур, стантсинҫе пилет памаҫҫӗ. Вӑл сийене пӗтерес пулмасти?

— Вакон ҫине 72 ҫын кӑна кӗртме йураҭ, есӗр 85 ҫын ытла ҫыханнӑ. Тӳле штрав!—тесе шултранах калаҫма тытӑнҫӗ контроҫор. Ҫак вӑхӑтра пассаширсем вӑрана пуҫларӗҫ, ман ҫийе тишкӗрсе пӑхаҫҫӗ. Усал ӗҫе тарӑна кӗртес мар тесе, укҫана кӑларма тыттӑнгӑм, 10 тенкӗ шутласа паратӑп.

Ҫӑнкӑр-ҫӑнкӑр!—турӗ. Пӑх: ман йешҫӗк ӑшӗнҫе пӗр крушкӑ выртаҭ. Пӗр мурӗ виҫҫӗмӗш полккӑ ҫинҫе йӑванкаланипе хӑйӗн крушкине ӳкерҫӗ.

Кантӑк пӑрккӑмӑн саланнӑ.

Акӑ, тыт квиттантсийе,—тет контроҫор.

— На, ҫорт, круп'куна,—терӗм те ҫилӗ кӳлленсе килнипе, пӗтӗм крушка виҫҫӗмӗш полккӑ ҫинелле. Ҫӳлти краштанин тапратрӗ шавлама. Ун хыҫҫӑн ыттисем те мана йатлама тытӑнҫӗҫ.

— Ес ху айӑплӑ, кантӑкпа вакон ҫине ларма сыхланмалла!

— Вӑл пилетсӗр ларнӑ. Ун пеккисем пассаширсен пакашӗсене те лайӑх йакатаҫҫӗ!

Вӑрнара ҫитнӗ ҫухне лӑпкӑ, тӳлек ҫывӑрса пыракан вакон сӑпса йӑви пек пулса ҫитрӗ.

— Епӗ кӑмантировккӑна кайнӑскер!—тесе кӑҫкӑрма тӑрӑшатӑп.

— Айта тухӑпӑр!—терӗ Окуртсов.—Ан хирӗҫсе тӑр вӗсемпе.

Ҫӑнах та пойӑс хамӑрӑн електритсӑ ҫути айне путнӑ стантсӑна ҫитсе тӑнӑ. Епӗр антӑмӑр та хваттерелле утрӑмӑр.

Тепӗр кунне саветуйушҫине хам кӑмантировккӑ ҫинҫен отҫот туса патӑм, телейсӗр кантӑк йешҫӗкне кӑтартрӑм. Шухӑшларӑм, саветуйушҫи мана пӗрре тӗтӗрлентерет уш, тесе.

— Сана Вӑрнара йама кирлӗ мар та мӗн... СРК-ри склатӗнҫе 9 йешҫӗк кантӑк пулнӑ. Склатӑн ҫӗнӗ саветушҫи тупнӑ ӑна,—терӗ саветуйушҫи.

**К. Каплин.**

# Тăвай пулнитсинђе

Тем инкекшĕн кăкăр ырата пуçларĕ. Тухтăр патне уттартăм хамăн ватăлнă урасене. Çитрĕм.

Пуђнитсине шала кĕмешкĕн алăк хăлăпне тытнăђĕ, ара алăк çĕнĕ ђухне ку кĕççепе клейонккăпа сăрнăђĕçкеха, халђ кăçташи—хăми çеç т ă р с а йулнă.

Алăка уçса шала кĕтĕм. Пăхатăп. Çын нумайах мар, хăшĕ вăйĕ çук пулсан та ăшăнасђĕха тесе, каллĕ-маллĕ уткаласа çÿреççĕ, хăшĕ саксем çинђех ђĕтрессе лараççĕ.

Кунта ђирлемен çын та ђирлемелле,— тет пĕр мушик— Вăрманхĕррисем виç пĕрђĕллĕ сухалне йакалаткаласа сивĕпе пăрланнă пăрĕсене иртте-ирте пăрахат.

— Çапла-а-а!—терĕç хĕрарăмсем.

— Ма хутмаççĕ-ши кăна?—теççĕ хĕрарăмсем.

Епĕ тултан кĕнĕ ђухне лайăх сăнаса кĕнĕскер:

— А вутă ăçта вĕсен, çур п у л е н к е те çуккă вĕт, тетĕп.

— Кăсем хĕллене хатĕрленмен иккен, терĕç пур те.

Кăмакисене тытса пăхатăп та вĕсем пушшех пÿлĕме сивĕтсе лараççĕ.

Никам та шала кĕменнине кура: аглисем халђ те килмени мĕн капла, тесе ыйтатăп.

— Çук-ха, теççĕ.

Тĕлĕнтĕм кайрăм. Совет уђрештенинђе те кăнтăрлана кĕтекенсем пурши вара тетĕп.

— А пулмасăр, теççĕ.

Сăмах çине çитсе те кĕђĕ „тухтăрĕ“.

Ак çыраканĕ çырма тытăнђĕ. Çырса пĕтермесĕр каллех кÿртмеççĕ.

— Шăнса вилетпĕр пуђ, теççĕ карђăксем.

Кÿртме тытăнђĕç. Малтанах мана кÿртрĕç.

Кĕрсенех сехетне пăхрăм та 11 сехет иртни 17 минут.

Кунта тухтăрĕ те, хвершăлĕ те çук иккен, аккушеркă кăна.

— Сан мĕн?

— Кăкăр ыратат, ÿсĕретĕп,—тетĕп.

Çыркаларĕ те:

— Кунне икĕ порошок ĕçетĕн, терĕ.

Вара еп шухăшлакаласа тухрăм.

Емелне ман пуç кĕрес пек шăтăкран тытарђĕç те, тухса утрăм киле май.

Киле çитсен, порошокне ĕçме те хăратăп.

Шухăшлăр халĕ хăвăрах: вăл итлемесĕр-тумасăр кăкăр ыратнинђен емел парса йађĕ. Тĕлĕнмелле. Çак кунсенђех Тăвай (Канаш р.) пуђнитсине тухтăрпа хвершăл кÿмелле.

Кунта ç и т м е н л ĕ х с е м татах та нумай. Тивĕçлĕ орканисатсисем кун çине çивĕђ куçпа пăхмалла.

**Й. Т. Воркаш.**

# Копператтăр йурри

Кÿкеçри (Шупашкар р.) потрепкопператсинђи прикашђăк Петров, коппер атив укçипе ашкăнса пурăнса икĕ пин тенкĕ растраттă тунă. Халђ ăна тĕрмене хупнă.

## Вăл йурланă.

Копператтăр пултăм та
Пурнăç пит шиккарнă.
Урамран та çăпата
Халĕ тухса тарнă.
Хысна укçи пиннеле!
Ĕçеп те çийетĕп.
Халĕ еп те „çĕнĕлле“
Пурăнма пĕлетĕп.
Йуррăм шăран хытăрах
Епĕ копператтăр,
Пур таврари йал тăрăх,
Йуррăм йантăратăр.

———

Пайтах ес йурларăн
Çак йурра, тăшман,
Тĕрмене çаклантăн
Шалђу тулђĕ сан. **Хв. Çитта.**

*Хусанкай П.*

## Кĕнекеçĕсем

**Н.** Ваçанкка, **Н.** Йанкас,
**Н.** Шелепи, **Н.** Патман,
**Н.** Шупуççынни... Лартас
Пурне те **Н.** курттăмăн.
„Çĕрйĕркелÿ“ кĕнекин
Хуплашкийĕ çийĕнђе
Епĕ куртăм тепĕр **Н.**
**Н. Хусанкай** тенĕђĕ.
Çавăнпа, йут ђап-сума
Илес мар шухăшăмпа.
Пĕлтеретĕп: йатăм ман
Халђђенех Хусанкай **П.**
Çаплах тĕрлĕ инкекрен
Кĕнеки курсассăн хур—
Тÿстерех Хусанкай **Н.**
Манăн унта мĕн ĕç пур?
Итлĕр-ха, ретактăр **Н.**,
Итлĕр-ха, коррректăр **Н.**,
Куçăрсем вĕт саккăрăн,
Сакăрвун кĕтеттĕрим?
**Н.** хутошнĕк, итлĕр-ха:
Сăра мĕлке ђикиђђен
Кăшт кăна палиттăра
Тасатсамăр е**Н**-сенђен.

Сдано в производство 1—I—33
Подписано к печати 4—II—33
Ответ. редактор П. Иванов
Секретарь журн. И. Илларионов

Ответлă ретактăр **П. Иванов.**

Ст. ф. Б. 200×285. Об'ем 1 п. л. 112,000 п. з. в п. л. Изд. газ. „Канаш“.
Уполн. Чувашлита № 1044. Чебоксары, тип. № 1 Чувашгиза. Заказ № 1 Тираж 4.100 экз




Криçĕспа аптăранă капиталиссем хăйсен планĕсене вăрттăн çĕрте туса пыраççĕ те, ханъа
çапоъънесем вĕсем çинъен пурĕ пĕрех пĕлеççĕ, вĕсене тăр шыв çине кăларса пыраççĕ.